# Ашшĕ-амăшĕ – ачин, ывăлĕ-хĕрĕ кун çути кăтартнă çыннисен пурнăçне тататъ ● 3 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*


ХЫПАР

# Чăваш ХĔРАРĂМĔ

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

44(914) №, 2015, ноябрь/чӳк, 7

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


ÇĂЛТĂР ÇӲПÇИ

## Культура тытăмне те тĕрек кирлех



**Светлана ЯКОВЛЕВА, чăваш эстрада юрăçи**

Çулталăк ытла Çĕрпӳри культура аталанăвĕн тата библиотека тытăмĕн центрĕн директорĕнче тăрăшатăп. Ман тытăмра 40 клуб тата 24 библиотека. Çавăнпа та ял тăрăхĕнчи культура ыйтăвĕсем тавра сăмах хускатасшăн.

Хальхи вăхăтра кашни культура çуртĕнчех пĕр-пĕр ушкăн пулмалла, унта ачасене те явăçтармалла. Сцена пĕчĕккисене аталантарать, çын умĕнче йĕркеллĕ тытма вĕрентет. Ачасем вăтанма, çухалса кайма пăрахаççĕ. Юрра-ташша ăстах мар пулсан е аванмарлансан, ан тив, халăх умне тухса пĕр-пĕр сăвă калани те çителĕклĕ. Кун пек ача пурнăçра нихăçан та тĕрĕс çул-йĕртен пăрăнмĕ.

Çĕрпӳри культура çурчĕсенче ăшă, таса. Зала пальто-курткăпа, çĕлĕкпе кĕрсе ларакан çук, клубсенче тумтире тирпейлĕ çакса хумалли майсем пур. Ялти клубсене тимлĕх сахал уйăрнăран тытса тăма çăмăлах мар. Укçи-тенкине хăйсен шырама тивет. Çавна май культура çурчĕсем юхăнса пыраççĕ, çамрăксем те унта ытлах туртăнасшăн мар. Концертсене те, ташă каçĕсене те çӳресшĕнех мар, вĕсене бар, кафе илĕртет. Ялти клубсенчи уявсенче ытларах – аслă çултисем. Юрать, асанне-кукамай концерт курма çӳрет, уявсене те хутшăнать, унсăрăн пысăк çăра çакса хума тиветчĕ пуль. Юлашки вăхăтра шкул хыççăн культура, музыка училищисене вĕренме каякан сахал. Çавна май çамрăк специалистсем те çителĕксĕр. Яла ĕçлеме каякан çамрăк тухтăрсене 1 миллион тенкĕ параççĕ, культура тытăмĕнче ĕçлекенсене хăçан та пулсан çавнашкал хавхалантарма тытăнсан тем пекехчĕ те.

Çĕрпӳ тăрăхĕнчи ялсенче чăвашла калаçаççĕ-ха, хула халăхĕ пăртак урăхларах, чăвашла пĕлсен те вырăс чĕлхине ытларах кăмăллать. Тăван чĕлхене аталантарас тесе хуларине пăхмасăрах кашни уява чăвашла пуçлама тăрăшатпăр.

Шупашкарта час-часах пысăк шайри уявсем ирteççĕ. Чăваш эстрада хăш-пĕр юрăçи халăх умне тухса фонограммăпа юрланине илтсен вăтаннипе çĕр тĕпне анса каяс килет. Пысăк уявсенче эстрада юрăçи мар, пĕр-пĕр ансамбль хăй пултарулăхĕпе савăнтарни темиçе хут сумлăрах. Ялти ушкăнсем тап-таса сасăпа юрланине итлеме кăмăллă. Сцена çине тухма кĕпесем хăйсен укçи-тенкипе çĕлеттереççĕ, килти мĕнпур ĕçе пăрахса репетицисене васкаççĕ. Авалхи юрă-кĕвĕ çĕр çинчен ан çухалтăр, ĕмĕрлĕхе упранса юлтăр, тăван чĕлхе ан çĕттĕр тесе чунтан тăрăшаççĕ. Тем тесен те, ялсенче чăвашлăх тапса тăрать-ха.




| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 07.11 | + 1 | – 2 |
| 08.11 | + 2 | 0 |
| 09.11 | 0 | – 1 |
| 10.11 | + 1 | – 3 |
| 11.11 | + 1 | + 1 |
| 12.11 | 0 | 0 |
| 13.11 | – 2 | – 2 |


● "Хисеп хăми" çинче – "Чăваш хĕрарăмĕн" тусĕсем 2 стр.

● Çынна хĕрхенни професси суйлама пулăшнă 4 стр.

● Йывăç та шăнать. Куна пуçламалли сĕнӳсем 8 стр.

● Пĕччен хĕрарăм... 9 стр.

● Шăнкăрав евĕр кулли асрах... 11 стр.




Татьяна НАУМОВА сăнӳкерчĕкĕ.

## Çитĕнӳ вăрттăнлăхĕ – юрату

*Раççейре çуллен чи лайăх 500 шкула палăртаççĕ. Вĕсене суйланă чухне вĕренекенсен пултарулăхне, ăмăрту-конкурс, предмет олимпиадисен, экзамен кăтартăвĕсене шута илеççĕ. Ялсенчи чи лайăх 200 шкула уйрăммăн асăнаççĕ. Чăваш Ен шкулĕсем çак конкурсра яланах палăраççĕ. Хуларисем çеç мар, ялтисем те федераци шайĕнче пысăк хака тивĕçеççĕ. Палăрнисен шучĕ çуллен ӳсни савăнтарать.*


5 стр.



Тăванăм, чăваш!



Эсĕ "ХЫПАР" çырăнма манман-и?

"Хыпар" – 625,62 тенкĕ,

"Хыпар"-эрне кун – 325,92 тенкĕ



ХИСЕП

# «Ачасем манманни савăнтарать»



**Дария Михайлова Муркаш районĕнчи Ятман ялĕнче пысăк çемьере çуралнă. «Эпĕ тăххăрмĕш ача пулнă, – каласа парать вăл. – Аслă пичче Ефрем пединститутра вĕреннĕ, истори учителĕ пулма ĕмĕтленнĕ. Хăрушă вăрçă унăн ĕмĕчĕсене аркатнă. Иккĕмĕш курсран ăна вăрçа илсе кайнă, Эстони тăрăхĕнче çапăçса хыпарсăр çухалнă вăл».**

Ашшĕ лавккара ĕçленĕ, çĕвĕç ăсталăхĕпе палăрнă. Дария 13 çула çитсен вăл чирлесе вилет, амăшĕн йышлă çемьене пĕчченех ура çине тăратма тивет. Хĕрарăм колхозра тăрăшнă, темĕнле йывăр пулсан та нăйкăшман, хăйĕн ачисене вĕрентесшĕн çуннă.

Вăрçă пуçланнă çул хĕрача 7-ре пулнă. Хаяр вăрçă вăхăтĕнче Дария ялти 4 çул вĕренмелли шкула çӳренĕ. «Вĕрентекенсем çитместчĕç, арçынучительсем повестка илсе урокранах туха каятчĕç. Пире 10-мĕш класран вĕренсе тухнă хĕрсем вĕрентетчĕç. Эвакуациленĕ ачасем те пурччĕ. Вăрçă нушине пур халăхпа пĕрле тӳссе ирттертĕмĕр. Выçлăх, чир-чĕр, сивĕ хĕл, çĕтĕк çи-пуç, кĕркунне уйра ĕçлени, тантăшсем почтальонран хăрани /вилнĕ хут килме пултарать-çке/ чĕрере тарăн суран хăварчĕ», – çаплапах аса илет ветеран хăйĕн ачалăхне.

Кĕçĕннисене кĕркунне йĕкел пуçтарттарнă, салтаксем валли посылкăсем яма килтен япаласем пухнă: «Йĕппе çип те пулсан илсе килме тăрăшăр, салтака вăл та кирлĕ», – тенĕ шкулта. Алсиш-нуски илсе пыракан та чылай пулнă – кашни килте тенĕ пекех вăрçăра çапăçакан пулнă-çке, посылка, тен, шăпах ывăлне-мăшăрне лекет?

1949 çулта хĕрача Çатракассинчи 7 çул вĕренмелли шкултан Хисеп хучĕпе вĕренсе тухать, ку вара вăтам шкула е техникума экзаменсăрах кĕме ирĕк парать. Дария Сергеевна Муркашри вăтам шкула кать. Аттестат илсен физика учителĕ пулас тĕллевпе Чăваш патшалăх институтне вĕренме кĕрет.

Мĕншĕн кăткăс предмета суйланăха? Муркашра вĕреннĕ чухне тыткăланă вăл ăна. Класс ертӳçи Андрей Любимов физика урокĕсенче ачасене тĕрлĕ опыт туса кăтартнă, темăна тĕплĕ ăнлантарнă.

Пулас мăшăрĕпе, Етĕрне районĕнчи Тури Ачак каччипе Родион Михайловпа, институтра вĕреннĕ чухне паллашнă вăл. Йĕкĕт те физик пулма хатĕрленнĕ. Хĕртен пĕр çул каярах вĕреннĕскерне институт хыççăн ĕçлеме Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Штанашри вăтам шкула яраççĕ. 1956 çулта çамрăксем çемье çавăраççĕ, Вăрманкас ялĕнче тĕпленеççĕ. Дария Сергеевна та Штанашри вăтам шкула куçать. Тĕрлĕ çулсенче вĕрентекен те, директорăн вĕрентӳ енĕпе ĕçлекен заместителĕ те, ертӳçĕ те пулать вăл. Çапла 1991 çулччен – тивĕçлĕ канăва тухиччен.

Штанашри вăтам шкулта унччен ачасем йышлă вĕреннĕ. Завуч дневникĕнче 1969-1970 çулсенчи ачасен списокĕ упранать: 29 класра 683 ача вĕреннĕ. Ачасем Штанашран, Кĕрлеврен, Вăрманкасран, Упукушкăньпе Урикассинчен, Горбатовкăран, Вырăсушкăньрен, Кивĕ Атикассинчен, Çĕнĕ Атикассинчен, Элĕк районĕнчен те кашни кунах тарăн пĕлӳ илме Штанаш шкулне утнă. Икĕ сменăпа вĕреннĕ вĕсем. Тĕп шкул çуртĕнче 7 класс кăна вырнаçма пултарнăран ыттисен тĕрлĕ çуртра вĕренме тивнĕ. 1985 çулта çĕнĕ шкула хута яраççĕ.

Шкулта ирттернĕ 35 çулта Дария Сергеевна ачасене математика, физика, астрономи, электротехника тата черчени вĕрентнĕ. Тăрăшулăхне кура ăна тĕрлĕ медальпе, чылай Хисеп тата Тав хучĕпе чысланă.

**Галина ЗОТОВА.**

**ХИСЕП ХĂМИ**

**• Вера Тихоновна БОГАТЫРЕВА, 1931 çулта çуралнă. Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекĕ ялĕ.**

**• Елена Егоровна КУРАМШИНА, 1947 çулта çуралнă. Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекĕ ялĕ.**

ХАÇАТ ТУСĔ

## Ырра вĕрентет

Эпĕ – пĕрремĕш ушкăн инваличĕ. Çĕмĕрле районĕнчи Турхан ялĕнче пурăнатăп. Çулĕсем самаях, унсăр пуçне сусăр пулнăран килтен туха çӳреме çăмăл мар мана. Пире савăнтарма нумай кирлĕ-и? Ваттисен кунĕнче Наталья Осипова библиотекарь тата Аня Мартыновăпа Катя Концова вĕренекенсем киле килсе саламланине аса илсе халь те хăпартланатăп. Шкул ачисем сăвă вуларĕç, юрă юрларĕç. Мана хисеп тунăшăн, манманшăн вĕсене тав сăмахĕ калас килет. Чунтанах савăнтăм çав кун.

Эпĕ питĕ вулама юрататăп. Наталья Николаевна кĕнекесене киле килсех парать. «Чăваш хĕрарăмне» нумайранпа çырăнса илетĕп, кашни çемьене унпа туслашма сĕнетĕп. Ырра вĕрентет вăл, пурăнма хавхалантарать. Пĕр кун та юратнă хаçатăмсăр иртмест.

**Альбина МИХАЙЛОВА.**

ПУЛТАРУЛĂХ

# "Шурă акăш"

Çапла ят панă Шупашкар районĕнчи Шăнкас хĕрарăмĕсем хăйсен ушкăнне. Çук, чăвашăн шап-шурă кĕпине тăхăнсан хăйсем те асамлă çак кайăк пек курăннипе кăна çыхăнман ку. Ташша тухсан чипeруксем акăш евĕр шунипе çеç те ăнлантарма çук ушкăн ятне. Пĕр тĕллевпе чăмăртанма тĕв тунă юрăташă ăстисем тăван тавралăх историне аван пĕлеççĕ. Ял çывăхĕнчи вăрманта шăпах Шуракăш текен вырăн пурмĕн, шăпах çакă хавхалантарнă та хĕрарăмсене. Çапла вара ку тăрăхра çуралса ӳснисемпе пĕрлех Шăнкас кинĕсем те "Шурă акăша" çавăрнă.

Унтанпа вăхăт нумай та иртмен-ха темелле – ушкăн 2014 çулхи нарăс уйăхĕнче кăна йĕркеленнĕ. Апла пулин те "Шурă акăш" пултарулăхĕ пирки ырă ят инçе-инçе саланма ĕлкĕрнĕ. Маларах вара хĕрарăмсем хăйсем тĕллĕн пухăнса хĕллехи тунсăха сирме хăтланнă, тĕрлĕ уяв йĕркеленĕ. Чăн та, вĕсене республикăри хăй тĕллĕн вĕреннĕ композиторсен фестивалĕн дипломанчĕ Любовь Николаева пулăшса пынă-ха малтан. Анчах та Шупашкар районне Çĕрпӳрен çӳрекен хастар хĕрарăм валли штат йĕркелеймен. Çапла Шăнкассем каллех тăлăха тăрса юлнă. Илемлĕх ертӳçисĕр ушкăн малалла епле аталантăр-ха? Анчах та утакан çула парăнтаратех.

Çав çулах "Шурă акăш" каччă тупнă темелле – хĕрарăмсене кĕвĕ ăсти Юрий Сергеев пулăшма килĕшнĕ. Вăрмар каччи И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн культурологи факультетĕнче ятарлă пĕлӳ илнĕ, Г.Чуркин, А.Белянкин, Н.Гараев патĕнче ăсталăхне туптанă. Çамрăк пулин те Ю.Сергеев Раççей шайĕпе иртнĕ конкурса хутшăнса лауреат ятне тивĕçнĕ. Ларма-тăма пĕлмен çивĕч каччă пĕчĕк ушкăна туххăмрах хавхалантарса янă, çапла урапа вырăнтан тапранса малалла кăлтăртатсах куснă. Пултаруллă ертӳçĕ кăтартса-вĕрентсе пынипе ушкăн кĕçех концертсем йĕркелеме пуçланă. Малтанах вырăнти халăха паллаштарнă-ха хăйсен пултарулăхĕпе, унтан юнашар ялсене тухса çӳреме пуçланă. Кĕçех район, республика шайĕнче те ытти ушкăнсемпе хăюллăнах тупăшма тытăннă. Кӳкеçри ваттисен çуртĕнче халĕ "Шурă акăш" – кĕтнĕ хăна. Çĕнтерӳ кунĕпе Апаш тăрăхĕнчи вăрçăпа тыл ветеранĕсене саламланă пултарулăх ăстисем. Районта вокал ушкăнĕсен хушшинче иртнĕ "Çĕршывăм çинчен юрлас килет" фестивальте лауреат ятне тивĕçнĕ. Çĕрпӳри Тихвин ярмăркkине пухăннисем те вĕсен ташши-юррине хавaспах йышăннă. Пĕтĕм чăвашсен акатуйне хутшăннăшăн Шăнкассем тав сăмахне тивĕçнĕ. Халĕ акă концертсемпе ытти районсене те çитесшĕн – Элĕкрен йыхрав илнĕ пултаруллăскерсем.

Ушкăн репертуарне пуянлатсах пырать. Автор юррисене те, чăвашла та, вырăсла та шăрантараççĕ пикесем. Çав вăхăтрах артист ăсталăхĕпе палăрнисем те пур вĕсен хушшинче – Роза Романовăпа Людмила Матвеева сценка кăтартас енĕпе маттур.

Мĕн туртать хĕрарăмсене çак ушкăна? Ялта капла та пушă вăхăт çукпа пĕрех вĕт. "Пĕр-пĕрнипе хутшăнни мĕне тăрать, – хуравлаççĕ хăйсем. – Пĕринчен тутлă пĕçерме, тепринчен – тĕрлеме, виççĕмĕшĕнчен çĕлеме вĕренетпĕр. Пире пĕрлештерсе тăраканни вара, паллах, юрă. Чуна уçса ярать вăл. Малалла туртăнма хăват хушать".

Яштака кĕлетке калăплама та ӳркенмеççĕ хĕрарăмсем. Алина Суркина акă малтан Шупашкарта фитнеса çӳренĕ, халĕ ялта хăй ятарлă хускануcене вĕрентет. Çавăнпах хĕрарăмсем кĕрхи ĕçсем вĕçленессе чăтайми кĕтеççĕ.

Сцена саккунĕсене çирĕп пăхăнать "Шурă акăш" – куракан умне тухмашкăн ятарлă тумтир – хушпу таранах – хатĕрлеççĕ. Çи-пуça тĕрлĕ уявпа е юрăсемпе килĕшӳллĕн янтăлаççĕ. Халĕ ушкăн пултарулăхне культура тытăмĕнче тăрăшакансем те асăрханă темелле – район администрацийĕ çĕнĕ баян туянса парса хавхалантарнă.

...Çын пурнăç тăршшĕпех лайăххи, ырри, илемли патне туртăнать. Хĕр-хĕрарăм уйрăмах туйăмлă ку енĕпе. Шăнкасри "Шурă акăш" хастарĕсене вара палăртнине пурнăçа кĕртмешкĕн, ĕмĕт патне çирĕппĕн утмашкăн шăпах хăйсене ташă-юрăра тупни пулăшать.



**Маргарита АНТОНОВА.**

Ӳнер улахĕ

# Чăваш хăвачĕ ан иксĕлтĕр

**Чӳкĕн 3-мĕшĕнче республикăри музейсенче, театрсемпе библиотекăсенче Пĕтĕм Раççейри Искусствăсен каçĕ иртрĕ. Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çамрăксен театрне художниксем, тĕпчевçĕсем, ал ăстисем, журналистсем, сăвăçсемпе çыравçăсем «Ӳнер улахне» пуçтарăнчĕç. Иосиф Трер йĕркелесе пыракан искусство каçĕнче чăваш хăвачĕ тавра пычĕ калаçу.**



Чăваш суверенитечĕ çинчен йышăннă деклараци вăя кĕнĕренпе 25 çул çитнине аса илни вырăнлă пулчĕ. Вăл – тĕнче шайĕнче ытти халăхпа пĕр тан пулнине çирĕплетекен документ. Пирĕн наци чĕлхине, культурине, йăли-йĕркине упраса хăвармалла, аталантармалла.

«Хавал» чĕлхе центрĕн ертӳçи Александр Блинов хамăра кăтартма пĕлмелли çинчен сăмах пуçарчĕ. Хăйне евĕрлĕхпе ыттисене илĕртме май тупмалла.

Георгий Фомиряков художник Шупашкар районĕнче пурăнать. 6 çултанпах ĕне çитерме çӳренĕ вăл. Пир тĕртекен асламăшне çип илсе пани тĕс суйлама вĕрентни çинчен каларĕ. Асăрханă-и, унăн ĕçĕсенче выльăх мăйраки сăнланнă. «Индие те хамăр ĕнесене кăтартма кайса килнĕ эпĕ», – курав пирки сăмах пуçарсан те шӳтлесе, те чăнласа хушса хучĕ ӳнер çынни.

Николай Балтаев дизайнерăн ачисем, тĕслĕхрен, 4 чĕлхепе калаçаççĕ. Ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкĕсене чи малтан чăвашла вĕрентет. «Наци туприне йăх-несĕл пехиллесе хăварнине асра тытмалла. Çакă – пирĕн пуянлăх», – терĕ вăл. Дизайнер хăйĕн пулăшуçисемпе пĕрле наци тумтирĕн куравĕсене йĕркелет.

Павел Попов чăваш тĕрри-эрешне тĕпченипе палăрнă. Халăхăн пĕр эрешĕ, сăмахран, уçă чĕре евĕрлине çирĕплетет вăл. Ку енĕпе конкурс та ирттернĕ. Тĕрлĕ ӳсĕмри çынсем ăна хăйсене май кăтартнă. Пĕр ача хĕрлĕ хурлăханпа эрешленĕ. Тепри уçă чĕрене йывăçран касса кăларнă. Виççĕмĕшĕ унпа хатĕр-хĕтĕре илемлетнĕ.

Çеçпĕл Мишши музейĕн пуçлăхĕ Антонина Андреева улаха хутшăнма май килнишĕн кăмăллă. Музее пыракансене кăвар чĕреллĕ поэт çинчен ӳкернĕ фильма кăтартнине палăртрĕ хĕрарăм. Çакă унăн сăнарне чĕрĕ пек йышăнма пулăшать. Музей çĕнĕ экспонатсемпе пуянланса пыни çинчен те каларĕ. Çавнашкалах Çеçпĕл çӳренĕ вырăнсенче ӳкернĕ документ фильмĕ кăмăла кайрĕ.

Ӳнер улахĕнче тăван халăх инструменчĕсен сассипе киленме, çĕнĕ сăвăсене хак пама май пулчĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**
С.ЖУРАВЛЕВ сăнӳкерчĕкĕ.

Экологи

# Йывăç касас вырăнне

Чăваш Республикинче «Хут бумĕ» экологи проекчĕ вăй илчĕ. Макулатура пуçтарас ĕçе ЧР Çутçанталăк министерстви тата «ЭКА» общество организацийĕ пуçарса янине палăртмалла.

Экологи рейтингĕнчен «Хут бумĕ» проекта Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти, Çĕмĕрлери, Канашри, Çĕмĕрле районĕнчи 13 шкул хутшăнни паллă. Çĕнĕ Шупашкарти 2-мĕш, Шупашкарти 54-мĕш, Çĕмĕрлери 1-мĕш вăтам шкул вĕренекенĕсем – чи хастаррисем.

Нумаях пулмасть Шупашкарти 2-мĕш лицей ачисем те кивĕ хут пуçтарма пуçланă. Макулатурăпа тепĕр хут усă курма май пур çĕртех хут кăлармашкăн йывăç касассине хирĕç вĕсем. Çак проект çутçанталăка упрама пулăшнине те кашниех ăнланать.

«Йывăç касни тавралăха сиен кӳрет. Макулатурăран 1 тонна хут хатĕрлесен 17 йывăç упранса юлать, 30 пин литр шыв перекетленет», – аса илтереççĕ проекта хутшăнакансем.

«Хут бумĕ» 2016 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕччен тăсăлĕ. Ку ĕçе кирек хăш организаци те хутшăнма пултарать. Проектăн малтанхи тапхăрне кăçалхи раштав уйăхĕнче «Симĕс Чăваш Ен» экологи форумĕ вăхăтĕнче пĕтĕмлетĕç. Малта пыракансене хаклă парнесемпе хавхалантарĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

Экстремизм

## 6 çултан тупăннă

**Алтай Республикинче 6 çул федераци шыравĕнче пулнă Канаш район çыннине тытса чарнă. Ăна экстремизмла ĕçсем тума пултарнă тесе айăпласçĕ.**

Следстви версийĕ тăрăх, саккуна пăснăскер 2007-2009 çулсенче нициoналистсен ушкăнĕнче тăрса Канаш хулинче халăх нумай çӳрекен вырăнсенче тĕрлĕ хут, видео салатнă. Вĕсем вара ытти наци çынни тĕлĕшĕпе курайманлăх çуратма, пуçлăхсене вăйпах ĕçрен кăларттарма хистенĕ.

Уголовлă ĕç пуçарсан право хуралĕн органĕсем ăна хăйсем патне чĕнтернĕ. Анчах арçын тарса çухалнă. Çавăнпах ун пирки федераци шыравне пĕлтернĕ. Кăçалхи юпа уйăхĕн вĕçĕччен вăл ăçта пурăнни те паллă пулман. Халĕ ăна Чăваш Ене илсе килнĕ. Следстви уголовлă ĕçе уçăмлатас тĕлĕшпе малалла ĕçлет.

**Анна НИКОЛАЕВА.**

Ĕçри хăрушсăрлăх

## Тимлĕхе çухатсан

**Çĕнĕ Шупашкарти строительство организицийĕн 38 çулти ĕçченĕ судпа айăпланнă. Унăн тимсĕрлĕхне пула рабочи пуçне вăйлах амантнă.**

16 хутлă çурт хăпартнă çĕрте пулнă ку ĕç-пуç. Кăçалхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнче стройорганизацийĕн ĕçченĕ айккине пăрăннăран объектра вăй хуракансене хăйсене çеç хăварнă. Çавăнпах ĕçе хăш йĕркепе туса пынине тĕрĕслеймен, хурăшсăрлăх йĕркине пăхăнмаллине те ăнлантарман. Тимлĕхе çухатнă арçынна металл арматура пуçран пырса çапнă – вăйлах амантнă, пуç шăмми те хуçăлнă.

**Татьяна НИКОЛАЕВА.**

**“Чăваш хĕрарăмне” çитес çурçуллăха çырăнма ан манăр. Тăван-пĕтен, тус-тантăш валли те аван парне пулĕ хаçат – вĕсене çырăнса памашкăн май тупăр.**

Сăмах парăр-ха

# Ӳкессе пĕлнĕ пулсан...

Татьяна НАУМОВА

**Юпа уйăхĕн 31-мĕшĕнче Шарм-эль-Шейх хулинчен вĕçсе хăпарнă самолета Санкт-Петербургра кĕтсе илеймен. Канма кайнă ашшĕ-амăшне, ывăл-хĕрне, тетĕш-йăмăкне ăсатнă чухне тăванĕсем пĕр-пĕрне текех нихăçан та чĕрĕ кураймасса, ыталаймасса-калаçаймасса усал тĕлĕкре те тĕлленменех ĕнтĕ.**

**Усал хыпар утпа çӳрет теççĕ. Чăнласах туххăмрах тĕнчипех сарăлчĕ вăл. Сарăмсăр вилĕм аллине лекнĕ ача-пăча ытларах калаçтарчĕ. Вĕсенчен чи кĕçĕнни – 10 уйăхри Дарина Громова. Амăшĕ вĕçсе тухас умĕн хĕрне Египетри аэропортра сăн ӳкерттерсе социаллă сете «тĕп пассажир» ятпа вырнаçтарнă. Çак ӳкерчĕк пурин чунĕнче те уйрăмах ырату çуратрĕ.**

**10 километра яхăн çӳллĕшĕнчен ӳкнĕ самолетра, паллах, чĕррисем юлман. Инкек 224 çын пурнăçне илсе кайнă...**

**Ăçта ӳкессе пĕлсен тӳшек сармалла та çав... Шел, инкек тупăнсах тăрать. Раççейре тĕрлĕ сăлтава пула çулсерен вăтамран 2 миллион çын вилет. Ку – пысăк пĕр хула. Çĕршывăмăрта кунсерен 5400 ытла çын вилет пулса тухать. Сехерте – 228!**

**Паллах, вĕсен йышĕнче чир-чĕре пула пурнăçран уйрăлнисем те пур. Пирĕн республикăра кăна пĕлтĕр 16535 çын вилнĕ. Кăçалхи тăхăр уйăхра çеç 12336 çынна юлашки çула ăсатма тивнĕ. Вĕсенчен 38-шĕ – çулталăка та çитмен ачасем.**

**Кăмăллă калаçу мар, паллах, анчах сăмах пуçармах тивет. Ăнсăртран сиксе тухнă инкекре çеç мар, ятарласа тунинче те таталать-çке çын пурнăçĕ. Ашшĕ-амăшĕ – тĕпренчĕкне, ывăл-хĕрĕ пурнăç парнеленĕ çыннине вĕлерни те тăтăш тĕл пулать кулленхи пурнăçра.**

**Çак кунсенче Çĕнĕ Шупашкар хĕрарăмĕ тĕлĕшпе 1,5 çулти ачине вĕлернĕ тесе айăплама сăлтав пур тесе йышăннă. Следстви версийĕ тăрăх, юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнче 23 çулти ӳсĕр хĕрарăм ачин сăмси-çăварне аллипе хупланă. Лешĕ сывлăшсăр антăхса вилнĕ. Амăшĕ хăйĕн киревсĕрлĕхне ачи нумай хушă чарăнмасăр йĕнипе сăлтавланă. Ку ĕç-пуçа малаллах тишкереççĕ.**

**Чунсăр ашшĕ-амăшĕ пирки хаçатра часчасах çыратпăр. Анчах кун çути парнеленĕ çывăх çыннисене пĕр шелсĕррĕн хĕнекен те сахал мар. Çавна пулах ваттисем пурнăçран та уйрăлаççĕ. Усал утăм тума укça-тенкĕ хĕтĕртет. Тĕрĕсрех – вăл çитменни, уншăн антăхни. Нумай чухне пуçа эрех-сăра минретет.**

**Канаш районĕнчи 40-ри арçынна та 71-ти ашшĕне вĕлернĕшĕн айăплаççĕ. Малтанах хирĕçнĕ вĕсем, каярах ывăлĕ çапăçма пикеннĕ. Юлашкинчен çывăх çыннин аллиурине çыхса минтер пичĕпе пăвнă. Çĕнĕ Шупашкарти 47 çулти арçын тĕлĕшĕпе те ашшĕне вĕлернĕшĕнех уголовлă ĕç пуçарнă. Следствипе суд палăртнă тăрăх, ӳсĕрскер ватта малтан аяк пĕрчисем хуçăлмалла, кĕлетки суранланмалла хĕненĕ, кайран сывлăшне те пӳлнĕ.**

**Çын чунсăрланса, хаярланса пынине мĕнпе сăлтавламалла-ши? Улатăр арçынни пĕлĕшĕ кушак çурине тапнăшăн кӳреннĕ. Следстви версийĕ тăрăх, юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче 66 çулти икĕ арçын пĕрин патĕнче эрех ĕçнĕ. Пĕр-пĕрне çывăх та палламан-ха вĕсем. Хăнана килни кушак çурине тапни хваттер хуçине килĕшмен. Çавăнпах ăна вăл мăйĕнчен, кăкăрĕнчен темиçе хутчен çĕçĕпе чикнĕ. Лешĕ вырăнтах вилнĕ. Лару-тăрăва уçăмлатма уголовлă ĕçе малалла тĕпчеççĕ.**



# Çынна хĕрхенни професси суйлама пулăшнă

**Епле пулсан та сывлăхран пĕлтерĕшлĕрех мул çук. Çирĕп сывлăх – чи хаклă пурлăх. Анчах та нумай чухне упрама пĕлместпĕр çак пуянлăха. Нумай сăлтава пула тата чылай чухне хамăрах пĕтеретпĕр ăна.**

## Хускану тата тепĕр хут хускану…

– Куславккара пурăнаттăмăр... – аса илет республикăри онкологи диспансерĕн уйрăм заведующийĕ Николай Токарев. – Тем çÿллĕш сăртсем пур унта. Вăрмана-мĕне çул вĕсем урлă выртатчĕ. Пирĕнпе, шăкăр-макăрпа, пĕрле кукамай та пыратчĕ. Çав сăртсем çине çăмăллăнах пирĕнпе танах хăпаратчĕ... Хашкамастчĕ те... Паянхи ăру урăхларах. Çамрăксен сывлăхĕ хавшани çинчен калаçатпăр. Сăнăр-ха, мĕн чухлĕ хусканаççĕ вĕсем? Утаççĕи, чупаççĕ-и? Компьютер умĕнче ларнипе инçе каяймăн. Хускану сывлăха çирпĕлетме пулăшни – пуша сăмах мар. Чире çапах та асăрхаттарма тăрăшмалла. Апат-çимĕç çинчен сăмах хускатмасăр та иртеймĕн. Хулара ялти пек килти çимĕçпе кăна сăйланаймастпăр, паллах, çапах та пахча çимĕçпе улма-çырла сĕтел çинче яланах пулмалла. Фастфуд çинчен вара мансан аванрах. Хамăр сывлăх – хамăр алăра. Çакна манмалла мар.

Сывлăха хусканупа ахальтен çыхăнтармасть тухтăр – сывă пурнăç йĕркине вăл хăй те мĕн ачаран хăнăхнă, халĕ те тытса пырать. Николай Токарев Канаш хулинчи Канаш урамĕнче çуралнă. Амăшĕ Надежда Сергеевна химик инженер пулнă. Ĕçне пулах хĕрарăма малтан Канашран Вăрнара, унтан Куславккана куçарнă. Çапла арçын ача Канашра çуралса шкула Вăрнарта кайнă, Куславккара вĕренсе тухнă. Мĕн пĕчĕкрен йăрă ӳснĕскер спортпа туслашнă. Вĕренӳре малтисен ретĕнче пынă, уйрăмах математикăна хими предмечĕсене килĕштернĕ. Ку енĕпе тĕрлĕ шайри олимпиадăсене хутшăнса тăтăшах çĕнтерӳпе таврăннă. Çавăнпах ашшĕ-амăшĕ вăл математика е хими учителĕ пуласса кĕтнĕ. Анчах та каччă пачах урăх çул суйланă.

Тăванĕ Ефросиния Паращенко Канашри хула больницин тухтăрĕ пулнă, арçын ачана тăтăшах хăй патне ĕçе илсе çӳренĕ. Ефросиния Андреевна йывăр чирлисене сывата пара çине тăратнине сăнанă арçын ачан чунĕнче асапланакан çынна шеллес, ăна пулăшас туйăм вăраннă. Çапла шкултан вĕренсе тухнă çĕре тухтăр пулас ĕмĕт çирĕпленсе çитнĕ. Каччă экзаменсем ăнăçлă тытса пысăк конкурс витĕр тухнă, Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕ пулса тăнă. Ăслăлăхри пĕрремĕш ĕçне онкологипе çыхăнтарнă. Вăлах пулас тухтăрăн специализацине уçăмлатнă. 1976 çулта алла диплом илсен Николай Токарев республикăри онкологи диспансерĕнче ĕçлеме пуçлать.



Н.ТОКАРЕВ архивĕнчи сăнӳкерчĕк.

Тепĕр çул унта онкоторакальнăй /кăкăр кăшкарĕпе çыхăннă/ уйрăм уçăлать. Çамрăк хирург унта ĕçлеме тытăнать. Çакна палăртма кăмăллă – Николай Иванович вĕçĕмсĕр шыравра, яланах çĕннине пĕлме ăнтăлать. Çамрăк чухне те çаплах пулнă. Ятарлă пĕлӳ илес тĕллевпе вăл 1978 çулта Минскри онкологи ăслăлăх-тĕпчев институтĕнче онкоторакальнăй хирурги енĕпе малалла вĕренет. Ĕç вырăнне таврăнсан тĕрĕс диагноз лартас енĕпе çав вăхăтри çĕнĕ йышши тĕпчев меслечĕсемпе усă курать. Каярахпа пĕлĕвне татах та тарăнлатать – 1979 çулта çак енĕпех Мускаври П.А.Герцен ячĕллĕ ăслăлăх-тĕпчев инситутне ординатурăна вĕренме кĕрет. Вĕрентекенĕсене – Раççей медицина ăслăлăхсен академийĕн член-корреспондентне Б.Петерсона тата А.Трахтенберг профессора – Николай Иванович паян та ырăпа кăна аса илет.

> **Николай Токарев çак тапхăрта 8000 яхăн операци тунă. Вĕсен хушшинче – кăткăссисене те. Тухтăр ăсталăхĕпе пĕлĕвне пула чирлисем операци хыççăн вилесси висĕ хут чакнă. Ку кăтарту – Раççейĕпе те чи лайăххисенчен пĕри. Уйрăм пуçлăхĕ халĕ те кунта иртекен операцисен 30-40 процентне хăй пурнăçлать.**

1981 çулта хăй ĕçленĕ вырăнах таврăнать вăл. Ятарлă пĕлӳ илнĕ, маларах хăйне ĕçре тĕрĕсленĕскерне онкоторакальнăй уйрăм пуçлăхне лартаççĕ. Çак тивĕçе Николай Токарев халĕ те тӳрĕ кăмăлпа, пысăк яваплăхпа пурнăçласа пырать.

## Пĕрремĕш…

Пĕрремĕш пациента е операцие пур тухтăр та астăвать ахăртнех. Николай Иванович та ăна манма пултараймасть. – Кĕрхи кун Шупашкар район больницинчен онкодиспансера 70 çулсенчи арçынна илсе килчĕç. Ӳпкинчен питĕ вăйлă юн каять. Хăй те вăйсăрланнă, калаçаймасть те. Сылтăм ӳпкине усал шыçă ярса илнĕ-мĕн. Аркансах пырать тата. Юна ниепле те юхма чараймастпăр. Васкавлăн операци тума шухăшларăмăр. Кăкăра касса уçсан усал шыçă ăш çурхахне те, аяк шăммисене те ярса илни курăнчĕ. Ку вырăнсене йăлтах касса илес пулать. Операци йĕркеллех иртрĕ. Арçынна реанимаци уйрăмне куçартăмăр. Пурте кăмăллă – тухтăрсем те, чирлин тăванĕсем те. Лару-тăру улшăнманнине кура киле пуçтарăнтăмăр. Кĕтмен çĕртен тухтăрсен пӳлĕмне медсестра вирхĕнсе кĕрет: "Пациент вилет, пĕр чарăнми юн каять!" Ывăнни таçта кайса кĕрет. Пурте реанимаци пӳлĕмне чупатпăр. Çĕлесе хунисене васкаса сӳтетĕп. Кăкăр кăшкарне 1,5 литр пек юн пухăннă. Ăна пуçтарса илетĕп те чирлине каялла ямашкăн анестезиологсене паратăп. Çав вăхăтрах ӳпке артерийĕн тĕвви саланса кайнине асăрхатăп. Тĕвĕрен çӳлерех хĕстерсе хуратăп. Тинех юн кайма чарăнать. Юн тата ытти шĕвек яма пăрахмастпăр-ха. Юн тымарне хĕстерсе хунинчен çӳлерех майĕпен çыхса хуратăп. Йĕркеллех пек. Маларах хĕстернине илетĕп кăна, унпа пĕрле халĕ кăна çыхса хуни те шуса анать. Татах юн сирпĕнет кăна. Кĕтмен çĕртен... чĕре тапма пăрахать! Ĕнтĕ эпĕ те пăлханма пуçлатăп. Чĕрене тӳрĕ массаж тăватăп. Ĕçтешĕмсем юн ярсах тăраççĕ. Пĕр минут иртет, иккĕ, виççĕмĕш кайрĕ. Çук, тапмасть чĕре... Ĕнтĕ пăлханнине пытараймастăп. Сивĕ тарпа витĕнтĕм. Кĕпе йĕп-йĕпе, хăть пăрса типĕт. Пăлханмашкăн сăлтавĕ пур: пилĕк минут иртсен чĕрене хускатса ярсан та çак çыннăн пуç мими вилĕ пулĕ. Вăл нимĕн те ас тумĕ. Чĕрĕ виле... Мĕн чухлĕ пурăнĕ вăл çавăн пек? Пĕр уйăх-и? Çулталăк-и? Шухăш чупать, чупать... Юлашки çеккунтсем... Çак самантра чĕре ĕçлесе каймасан – пĕтĕмпех пĕтрĕ! Массаж тата вăйлăрах тăватăп та... чĕре кăлт! тапса илнине асăрхатăп. "Дефбриллятор!!! – кăшкăратăп. – Заряд! Татах заряд!" Чĕре кахаллăн кăна ĕçлеме пуçларĕ. Унтан пĕтĕм вăйран тапма тытăнчĕ. Ур-ра! Вилĕме çĕнтертĕмĕр! Ĕçтешĕмсен пичĕсене сăнатăп – майĕпен сăн кĕме пуçларĕ пурне те. Малалла йăлтах майлашăнчĕ. Юн пусăмĕ йĕркене кĕчĕ. Чирли наркозран тухрĕ, юн калăпăшĕ йĕркеллĕ. 1-2 кунран арçынна реанимацирен куçартăмăр. 2 эрнерен вăл больницăран та тухрĕ. Каярахпа кун пек мар кăткăс операцисем ирттерме тивнĕ, паллах, анчах та пĕрремĕшĕ асăмран нихăçан та тухас çук".

## Кашни пурнăç – пĕр шăпа

Çапла, хирург ĕçĕ çăмăл мар. Çакна Николай Ивановичăн ирех кĕмĕлленнĕ çӳçĕ те çирĕплетет. Пăлханнине ирттерме, паллах, спорт пулăшать. Тата – çывăх çыннисем: хаклă мăшăрĕ Зоя Никодимовна /вăл та тухтăр/ тата ывăлĕ Алексей – юрист.

Ĕçтешĕсем ăнланни, коллектив пĕр шухăшлă пулни те йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать. Вĕренекенĕсем А.Добрянский тата В.Полянский юнашарах. Туслă коллектив çăлса хăварнă кашни пурнăçшăн савăнать.

Паллах, алла скальпель тытса вилĕмпе кĕрешнĕ чух никам та награда пирки шухăшламасть. Çапах та ĕçшĕн тивĕçлĕ хакланишĕн савăнмалла çеç. Николай Токарев пултарулăхĕшĕн тата тăрăшулăхĕшĕн "Ĕçри хастарлăхшăн" медале, "Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ" хисеплĕ ята тивĕçнĕ.

Татах та пулĕç-ха вĕсем, наградăсем, хисеплĕ ятсем. Тухтăршăн чи пĕлтерĕшли вара – чирлĕ çын ура çине тăни.

– Çапах та чирпе кĕрешнинчен ăна асăрхаттарма çăмăлрах, – маларах пуçланă сăмах патнех таврăнать Николай Иванович. – Тухтăр патне вăхăтра пыни те пĕлтерĕшлĕ. Нумаях пулмасть кăна акă пĕр арçынна илсе килчĕç пирĕн пата. Сывлăхне тĕрĕсленĕ хыççăн диагноза çирĕплетрĕмĕр, операци тумалли калărăмăр. Арçын ним тусан та кастарма килĕшмерĕ, хăйĕн нимĕн те ыратманнине палăртрĕ. Вăхăт иртрĕ. Кĕçех çак арçын каллех пирĕн пата çаврăнса çитрĕ. Шалта йăлт ыратать-мĕн, ниçта кайса кĕмелли çук. Сывлăхне тепĕр хут тĕрĕсленĕ хыççăн малтан пĕчĕк кăна пулнă шыçă тем пысăкăш ӳссе кайни палăрчĕ...

Юлашки вăхăтра хĕрарăмсен хушшинче те ӳпке усал шыççи сарăлса пынине палăртать тухтăр. Нумай пулмасть кăна-ха 8-9 арçын пуçне 1 хĕрарăм тĕлĕшпе çакăн евĕр диагноз палăртнă, халĕ çак шайлашу пачах урăхла. Хĕр-хĕрарăм юлашки çулсенче арçынсене пур енĕпе те хăваласа çитесшĕн курăнать – эрех-сăрапа виçесĕр айкашни те, алăран пирус ямасăр мăкăрлантарни те ырăпа вĕçленмессине манас марччĕ.

**Рита АРТИ.**

# Сĕтре, какайра – сиенлĕ япаласем

Аллергипе аптракан ачасене качака сĕтне ĕçтерме сĕнеççĕ. Анчах та çак шĕвекех аллергие аталантарма пултарнине те хирĕçлемеççĕ специалистсем. Чире яраканĕ – соматика клеткисем. Шăпах сĕтре сиенлĕ çак япаласем нумаййине Йĕпреç районĕнчи пĕр хуçалăхра тупса палăртрĕç кăçал Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн ĕçченĕсем.

Сăмах май, "Чĕрчунсен организмĕнче, вĕсенчен хатĕрленĕ продукципе тата выльăх апачĕнче усă курма юраман, сиенлĕ япаласен юлашкийĕсем пуррине палăртас тĕллевлĕ мониторинг ирттерме май пĕлтĕр те соматика клеткисем тупса палăртнăччĕ, анчах – ĕне сĕтĕнче.

Чăннипе, кăçал та висĕ хуçалăхри /Шупашкар тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи, çавăн пекех Чулхулари пĕр обществăн/ ĕне сĕчĕ çак клеткăсемпе "пуяннине" лабораторие тĕпчевĕсем çирĕплетрĕç.

Çакă, ахăртнех, маститпа çыхăннă. Асăннă амакпа аптăракан выльăх сĕчĕ çын вар-хырăмне пăсма пултарать.

Чăваш Енре вара, пĕлетпĕр ĕнтĕ, маститран хăтăлса пĕтеймен хуçалăхсем пур-ха хальхĕхе.

Кăçал лабораторире тĕрĕслеттернĕ какай та йĕркеллех мар. Сысна ашĕнче КМАФАнМ текен сиенлĕ микроорганизмсем, сальмонеллăсем, тетрациклин ушкăнне кĕртнĕ антибиотиксем тупса палăртнă: Красноармейски, Муркаш, Канаш, Çĕмĕрле, Шупашкар районĕсенче.

**Н.ВАСИЛЬЕВА,**
**Россельхознадзорăн республикăри управленийĕн ĕçченĕ.**



МАТТУРСЕМ!

# Çитĕнÿ вăрттăнлăхĕ – юрату

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Республикăри кăтартусене шута илсен, Елчĕксем виççĕмĕш çул Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хыççăн тухăçлă кăтартусемпе виççĕмĕш вырăнта пыраççĕ. Ачасене Раççей шайĕнчи олимпиадăсене ăнăçлă хатĕрлессипе, ĕçре çитĕнÿсем тунипе Любовь Шепиновăпа Сергей Долгова /Елчĕкри вăтам шкул/, Ираида Павловăна /Лаш Таяпари вăтам шкул/ тата Олег Осипова /Çирĕклĕ Шăхальти вăтам шкул/ палăртмалла. Ачасене олимпиадăсен юлашки тапхăрне илсе тухма пултарнă пултаруллă хăш-пĕр вĕрентекенпе сывăхрах паллашас тĕллевпе Елчĕк районне çула тухрăмăр.

## Яланах шыравра

Елчĕкри вăтам шкула пырса кĕнĕ чухне Любовь Шепинова шăпах урок ирттерчĕ. Инженер класĕнче ăс пухакан каччăсем çавра сĕтел тавра пуçтарăнса нимĕçле хĕрсех тем пирки калаçатчĕç, темĕн сÿтсе яватчĕç. Хăнасене юрă та



● ИРАИДА ПАВЛОВА.

парнелерĕç 11-мĕш класс йĕкĕчĕсем. Тĕрĕссипе, Любовь Петровна кашни уроках çапла ирттерет – сĕтел тавра. Пĕр-пĕрне куçран пăхса калаçсан кăмăллăрах-çке.

– Нимĕç чĕлхи пурнăçра кирлĕ пуласси иккĕлентермест. Пурнăçăма техника специальноçĕпе çыхăнтарма ĕмĕтленетĕп. Германие каяс тĕллев пур. Ку çĕршыв машина тăвас енĕпе аталаннă, – терĕ Антон Кучков ку ют чĕлхене ăшне хывнин пĕлтерĕшне ăнлантарса.

– Ачасен нимĕç чĕлхи вĕренес туртăмĕ чакнине курмастăп. 33 çул ĕçлетĕп шкулта. Çак тапхăрта 19 вĕренекен манăн çула суйларĕ. Пиллĕкĕшĕ хамăр районтах тăрăшать. Çакă мана савăнтарать. Хальхи ачасем ют чĕлхе кирлине туйса-пĕлсе çитĕнеççĕ, – пĕлтерчĕ кăмăллăн вĕрентекен. – Ачасем – чĕлхене, эпĕ вĕсене юратмасан çитĕнÿ тăваймăн. Пĕр-пĕр конкурс йĕркеленнине пĕлтерсенех хутшăнас кăмăлне систереççĕ. Туртăм пулмасан вĕрентнин усси çук. Пĕр чĕлхе тупсан вара çитĕнÿ пулатех. Ача малтан – вĕрентекене, унтан тин предмета юратма тытăнать тесе ахальтен каламаççĕ вĕт. Тĕрĕссипе, хам та шкулта учителе кăмăлланăранах ют чĕлхесен факультетне вĕренме кĕнĕ, – систерет Любовь Шепинова.

Паллах, урокра ĕçлени çеç çителĕксĕр, нумай хушма материалпа усă курма тивет. Ачасем хăйсем те часчасах презентацисем хатĕрлеççĕ. Олимпиадăсене, конкурссене хатĕрленнĕ чухне уроксем хыççăн те юлаççĕ, тăхтавра та вăхăта сая ямаççĕ.

Любовь Петровна вĕренекенĕсем республикăри олимпиадăсенче яланах малти вырăнсене йышăнаççĕ. Шел, Раççей шайĕнчи ăмăртăва Германире вĕренекен ачасем хутшăннăран чăвашсем çĕршыв шайĕнче палăраймаççĕ.

– Çитĕнÿсем малалла талпăнма хавхалантараççĕ. Ачасем юратнă чухне ĕçлес те ĕçлес килет. Паян профессии суйлама ирĕк парсан та урăххине йышăнман пулăттăм. Вĕрентекенĕн пурнăçра пур енлĕн аталаннă çын пулмалла, унсăрăн ачасен умĕнче намăсланасси те инçе мар. Çавăнпах яланах шыравра эпир, – палăртать Любовь Петровна.

Хăй вара ют чĕлхе патне 7-мĕш класра вĕреннĕ вăхăтра туртăннă. Шăпах çакăн чухне амăшĕ: «Ачам, нимĕç чĕлхи вĕрентекенех пулатăн пуль», – тенĕ. Чи çывăх çынни хĕрĕн пултаруллăхне сисмен мар-тăр, çавăнпах унăн сăмахĕ пĕлтерĕшлĕ пулнă та.

– Ĕçри йывăрлăх мĕн-ши? Ачасем килти ĕçе пурнăçласан, урока юратса çÿресен – пĕтĕмпех йĕркеллĕ те ăнăçлă. Урок вăл ачасемпе сывăх калаçни те, пурнăç ыйтăвĕсене тата пани те, – чунне уçать нимĕç чĕлхи вĕрентекенĕ. – Урокри темăсем те тĕрлĕрен. Халĕ эпир музыка пирки калаçатпăр. Часах профессисем патне çитĕпĕр. Кун пек чухне ачасем вара усăлса каяççĕ. Çакăнта маншăн чи тĕлĕнмелли – никам та вĕрентекен ĕçне суйласшăн мар. «Патшалăх енчен пулăшу пулсан – кайăттăмăр», «Ачасем итлемеççĕ. Ĕçлеме йывăр», – теççĕ. Мĕнле итлемеççĕ вĕсем? Пĕлместĕп. Манăн ун пекки пулман. Ачасене куçран пăхсах ăнланмалла, юратмалла – вĕрентекен вĕсене хисепленине туйччăр. Юрату вăл – хире-хирĕç.

## Пултаруллисене тупма пĕлет

Лаш Таяпари вăтам шкулта биологипе химии вĕрентекен Ираида Павлова «Çамрăк эколог» кружок ертсе пырать. Тĕрлĕ класра вĕренекен 18 ача çÿрет кунта. Паллах, вĕсем – таврари çамрăк чи маттур тĕпчевçĕсемпе таврапĕлÿçĕсем. Ахальтен-и тĕрлĕ шайри ăмăртусене хутшăнаççĕ, палăраççĕ. 11-мĕш класра вĕренекен Андрей Павлов та акă Раççей шайĕнчи олимпиадăна хутшăннă.

– Мускаври олимпиадăсем те республикăрисен евĕрлех иртеççĕ, ĕçĕсем кăна йывăртарах. Унта лекес тесе питĕ нумай хатĕрленетпĕр, – тет республика шайĕнче виççĕмĕш çул ăмăртма палăртакансер.

Биологипе вăл республикăра икĕ хутчен 2-мĕш, экологипе 1-мĕш вырăн йышăннă. Ираида Николаевна амăшĕ пулнăран шкулта çеç мар, килĕнче те хатĕрленеççĕ-вĕренеççĕ вĕсем. Пушă



● ЛЮБОВЬ ШЕПИНОВА.

вăхăт тупăнсанах кĕнеке умне вырнаçаççĕ.

– Анне нумай пулăшса-хавхалантарса пырать, тĕрлĕ кĕнеке-литература сĕнет. Вĕсене вулани çеç çителĕксĕр, тавралăха та сăнамалла-тĕпчемелле. Хула ачисен олимпиадăсене хатĕрленме майсем те, вăхăт та нумайрах. Пирĕн атте-аннене те пулăшмалла. Пур çĕрте те ĕлкĕрме çăмăл мар. Манăн тете те пур. Тăватă çул каялла Алексей Раççей шайĕнче призер пулчĕ. Вăл та çĕрĕ-çĕрĕпе ларатчĕ. Унăн тĕслĕхĕ те мана хавхалантарать. Леша мана нумай пулăшать, – тет Андрей.

Шкулти маттур ачасен йышĕнче пĕччен мар вăл. 10-мĕш класра вĕренекен Анастасия Волковăпа Диле Айзетуллова та республикăри олимпиадăсен призерĕсем пулса тăнă. Пурĕ вара ку шкулта – вунна яхăн призер. Кăçал 11-мĕш класс пĕтернĕ Антон Игнатьев та çав йышранах.

– Пирĕн шкул ятне çÿле çĕклеççĕ вĕсем. Ираида Николаевна та тăрăшуллă. Ачасемпе хастар, нумай ĕçлет. Пултаруллисене тупма пĕлет, – мăнаçланать шкул директорĕ Марина Меметова.

## Биолог пулма çуралнă математик

– Манăн пĕрремĕш професси – математикăпа физика учителĕ. Ку яла качча килтĕм те – ĕç вырăнĕ пулмарĕ. Çавăнпах иккĕмĕш пĕлÿ илес терĕм. Ача чухнех биологипе химине юратнăран вĕсене суйларăм. Вĕреннĕ вăхăтрах ĕçлеме пуçларăм. Аслăрах çулти учительсем нумай пулăшрĕç. Хунямапа хуняçа та ачасене сахал мар пăхнă. Вĕсем пулăшман тăк, тен, иккĕмĕш пĕлĕве илеймен те пулăттăм, – тет Лаш Таяпари вăтам шкулта 22 -мĕш çул тăрăшакан Ираида Павлова.

Вăл вĕрентекен ачасем район, республика шайĕнчи ăмăртусене çеç мар, Раççей шайĕнче ирттеккеннисене те хутшăнса палăраççĕ. Ялта пурăнакан кун пек çитĕнÿ туни, тĕрĕссипе, хăшне-пĕрне тĕлĕнтерет те.

– 2010 çулта аслă ывăлпа Белгорода çити кайрăмăр. Ялтан килнĕ ачасем татах та пурчĕ. Ача ăçта: хулара е ялта – çурални пĕлтерĕшлĕ мар. Кашни хăйне май пултаруллă. Вăхăтра асăрхама, хавхалантарма çеç пĕлмелле. Кам пултарасси, паллах, тÿрех курăнмасть. Тĕрлĕ ăмăрту, конкурс, викторина ирттерсен çеç кам хăш енĕпе тавçăрулли палăрать. Килти ĕçе епле пурнăçлани те çакна асăрхама май парать. Маттурисем килти ĕçе яланах тĕплĕ тата хăйне евĕр пурнăçлаççĕ. Вĕсем çĕнĕрен-çĕннине пĕлсе ытти ачасене каласа кăтартаççĕ. Паллах, ачан туртăм пулмалла. Анчах ку – çителĕксĕр. Чăннипех кăсăклантарма пĕлес тесен хăвăн ĕçне, чи малтан ачасене, юратмалла. Вĕсемпе тепĕр чухне хам та ачапчаланса каятăп. Пĕр чĕлхе тупсан ĕçлеме те çăмăл, – систерет Ираида Николаевна.

Кружокра та, урокра та ушкăнпа ĕçлеме хăнăхнă вĕсем. Пĕр тĕвĕре ĕçлеме пĕлни те – аталану. Олимпиадăна хатĕрленĕ чухне пур ÿсĕмрине те пĕрле пухать вĕрентекен. Çакă та пулăшать. Аслисем кĕçĕн класра мĕн вĕреннине аса илеççĕ, кĕçĕннисене вĕрентсе-пулăшса пыраççĕ.

– Ача ачана, тĕрĕссипе, вĕрентекенрен те лайăхрах ăнлантарать. Хăй чĕлхипе каласа кăтартать. Ăнланмасан аслă тусĕнчен иккĕмĕш хутчен ыйтма кĕçĕнни. Тепĕр чухне, тен, пирĕнтен ыйтма именеççĕ вĕсем, – тет ялти учитель.

Паллах, ĕни те, сысни те, чăххичĕппи те картиш тулли унăн.

– Биолог пулнă май манăн пурне те усрамалла, – шÿтлет вăл кун пирки.

Çав вăхăтрах ачасем валли те вăхăт тупмалла. Вĕсене çĕннине, кăсăклине каласа кăтартма Интернетри тĕрлĕ ятарлă сайта сахал мар тишкерет, кĕнекесем çырăнса илет Ираида Павлова.

– Нина Александровна вĕрентекен: «Эсĕ манăн ĕçе малалла тăсатăнах», – тенĕччĕ. 10 класс пĕтерсен, чăн та, педагогика институтне вĕренме кĕтĕм. Анчах пурнăçра математик мар, биолог пулса тăтăм. Хальхи куçпа пăхсан мана биологи ытларах та килĕшет. Кунта пĕлмелли, тĕпчемелли нумай. Ачасем те кăсăкланаççĕ. Вĕсене çутçанталăк илемĕ те, хурт-кăпшанки те илĕртет.

Тепĕр чухне ывăнни те пулать, анчах ачасен ыйтуллă, çиçекен куçĕсене курсан малаллах ĕçлес килет. Шкула чăннипех те савăнсах утатăп. Хама урăх ĕçре пачах курмастăп, – пытармасть Ираида Павлова.

Кашни вĕрентекенех чи малтан ĕçне, ачасене юратмаллине пĕлтерчĕ. Çакă, тен, шăпах ăнăçăн ăнтăлу вăрттăнлăхĕ. Ансат вăл, çапах шăпах курăмлăскер, çитĕнÿ тума пулăшаканскер.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕсем.

**2014-15 вĕренÿ çулĕнче палăрнă 500 чи лайăх шкул йышне Шупашкарти 3-мĕш, 44-мĕш тата 2-мĕш лицейсем, 5-мĕш, 4-мĕш тата 1-мĕш гимназисем, Çĕнĕ Шупашкарти 6-мĕш гимнази, Çĕнĕ Шупашкарти 18-мĕш лицей тата Шупашкарти 61-мĕш вăтам шкул кĕнĕ. Ялта вырнаçнисенчен Вăрмарти Г.Е.Егоров ячĕллĕ, Патăрьелĕнчи 1-мĕш, Тăвайри, Муркашри, Вăрнарти 2-мĕш тата 1-мĕш, Элĕкри И.Я. Яковлев ячĕллĕ, Пăрачкаври, Комсомольскинчи 2-мĕш вăтам шкулсем, Кÿкеçри лицей кĕнĕ. Лайăххисен йышĕнче Елчĕк районĕ те пур. Елчĕкри тата Лаш Таяпари В.В.Андреев ячĕллĕ вăтам шкулсем – палăрнисен шутĕнче.**



АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР

### Тăпăрч хăпартăвĕ



**200 грамм тăпăрч, 3-4 апат кашăкĕ манна кĕрпи, 3 апат кашăкĕ сахăр, 1 çăмарта, 1 апат кашăкĕ хăйма, 1 апат кашăкĕ çăнăх, иçĕм кирлĕ.**

Иçĕме шӳтермелле. Тăпăрча сахăрпа, çăмартапа, хăймапа, манна кĕрпипе пăтратмалла, иçĕм хушмалла. Çак хутăша тип çу сĕрнĕ çатмана куçармалла. Тăпăрч хăпартăвне духовкăра пĕçермелле.

### Çăмартапа, сĕтпе

**10 çăмарта, 0,5 литр сĕт, услам çу, тăвар кирлĕ.**

Сĕте çăмартапа, тăварпа пăтратмалла. Çак хутăша услам çу сĕрнĕ çатмана ямалла. Çăмарта хăпартăвне духовкăра 30 минут пĕçермелле.

### Хачапури

**200 грамм сыр, 100 грамм укроп, 2 çăмарта, 3 апат кашăкĕ çăнăх, 1 стакан хăйма, 2 апат кашăкĕ тип çу кирлĕ.**

Сыра теркăламалла, укропа вĕттĕн касмалла. Хăймана сырпа, укроппа пăтратмалла, çăмарта, çăнăх хушса чуста çăрмалла. Ăна çатмана куçармалла. Хупласа çулăм çинче 7 минут пĕçермелле. Хупăлчана уçса хачапурие çаврăмалла. 5 минутран çулăма сӳнтермелле.

### Кишĕр торчĕ

**400 грамм сĕлĕ çăнăхĕ, 1/2 чей кашăкĕ апат соди, чĕптĕм корица, тăвар, 4 çăмарта, 2 апат кашăкĕ тип çу, 6 кишĕр, çуршар стакан майăр, иçĕм, консервланă 200 грамм ананас, 2 апат кашăкĕ сахăр кирлĕ.**

Иçĕме шӳтермелле, кишĕре теркăламалла. Ананаса блендерпа вĕтетмелле. Çăмартана сахăрпа пăтратса кăпăклантармалла.

Кишĕре çăмартапа, ананаспа, иçĕмпе, майăрпа, çупа пăтратмалла, апат соди, корица, тăвар, çăнăх хушмалла. Кишĕр тортне духовкăра 1 сехет пĕçермелле. Сĕтел çине лартиччен хăйма кремĕ сĕрме юрать.

### Панулми канфечĕ

**0,5 килограмм типĕтнĕ панулми, 1 апат кашăкĕ сахăр çăнăхĕ кирлĕ.**

Панулмие аш арманĕ витĕр кăлармалла. Çаврашкасем тумалла. Çиелтен сахăр çăнăхĕ сапмалла.

### Шăккалатри банан

**2 банан, 50 грамм шăккалат, кокос хăрпăкĕ кирлĕ.**

Шăккалата ирĕлтермелле. Банана çаврашкан касмалла. Кашни çаврашкана шăккалата чиксе кăлармалла, кокос хăрпăкĕнче йăваламалла. Шăккалатри банана 20-30 минутлăха сивĕтмĕше лартмалла.

### Какайпа çăмарта салачĕ

**500 грамм пăру какайĕ, пĕçернĕ 4 çăмарта, тăварланă 6 хăяр, 3 шăл ыхра, 1 стакан майăр, 200 грамм майонез кирлĕ.**

Какая тăваткалласа турамалла, сухана вĕттĕн касмалла, хăяра, çăмартана теркăламалла. Вĕтетнĕ аçтăрхан майăрне ăшаламалла. Салата сийлесе /какай – хăярпа ыхра – çăмарта – аçтăрхан майăрĕ/ хăпартмалла. Кашни сийе майонез сĕрмелле.

### Кавăн пĕремĕкĕ

**300-400 грамм кавăн, 150 грамм услам çу, 150 грамм пыл, 100 грамм сахăр, 1 чей кашăкĕ тăвар, 1 чей кашăкĕ апат соди, 1 апат кашăкĕ лимон, 450 грамм çăнăх, 10 грамм çĕпре, тип çу, ванилин кирлĕ.**

Кавăна тураса шывпа пĕçермелле, сăрхăнтарса тӳмелле. Нимĕре теркăланă услам çупа, корицăпа, пылпа, сахăрпа, ванилинпа, çĕпрепе пăтратмалла. Тăвар, апат содипе лимон, çăнăх хушса чуста çăрмалла. Ăна 2-3 сехетлĕхе сивĕтмĕше хумалла.

Алла тип çу сĕрсе чустаран çаврашкасем тумалла. Пĕремĕке духовкăра 30-40 минут пĕçермелле.

### Пулă паштечĕ

**Консервланă 1 банка лосось, тĕтĕмленĕ 200 грамм лосось, 400 грамм çемçе сыр, 1 апат кашăкĕ кетчуп кирлĕ.**

Шăмминчен уйăрнă пулла, сыра, кетчупа блендерпа пăтратмалла. Паштета çăкăр çине сĕрсе çимелле.

ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Йывăç та шăнать



Сивве тӳсĕмсĕр йывăça е тĕме юпа-чӳк уйăхĕсенче температура улшăнăвĕнчен сыхламалла. Тымарĕсем ан шăнччăр тесен вĕсене торфпа е çулçăпа лайăх хупламалла, юр ларнă хыççăн таптаса тухни те пăсмĕ.

Чылай чухне йывăçсем сивĕпе çурăлаççĕ. Çуркунне вара унта тĕрлĕ чир лекме пултарать. Вуллисем çурăлса аманасран вĕсене тĕрлĕ япалапа çыхма юрать. Анчах ăна малтан ешĕл сенкерпе /медный купорос/ сапмалла. Çакă йывăçа ăшă вăхăтсенче тĕрлĕ шăрка ересрен тата вулли кăвакарасран сыхлĕ. Сапнă хутăш типнĕ хыççăн çеç йывăça чĕркеме юрать.

Йывăça аялтан çӳлелле 1,5 метртан кая мар чĕркесе хăпартмалла. Вуллине çаврăса çыхма çĕр çумĕнчен тытăнмалла. Аялти пайĕ сиенленсен улмуççи вилме пултарать. Чĕркенĕ чухне тачă çаврăмалла, темиçе сий тусан та ытлашши пулмĕ. Çил ан силлетĕр тесен çиелтен çемçе пралукпа тыттармалла.

Йывăç вуллине поролонпа çаврăрса çыхма та юрать. Вăл сивĕрен лайăх хӳтĕлет. Анчах хĕллехи шартламасем хыççăн ăна тӳрех салтмалла, унсăрăн йывăç вулли хĕрме, хуппи сĕвĕнме пултарать.

ĂСТА АЛĂ

# Штукатур – хамăрах

Штукатурка тумалли раствор çирĕпрех сĕрĕнтĕр тесен стенана ятарласах тикĕсмарлатмалла. Унсăр пуçне ăна тĕрлĕ варалантăкран хырса-çуса тасатмалла. Штукатурка мĕн вăхăт тытăнса тăрасси стенана епле хатĕрленинчен те нумай килет. Чул, кирпĕч, бетон сийсем çинче 10 миллиметртан кая мар йĕрсем кирлĕ. Енчен те стена яка тăк ăна пуртăпа, зубилăпа е урăх инструментпа "илемсĕрлетмелле". Электричествăпа ĕçлекен тĕрлĕ машинăпа та усă курма юрать.

УСĂЛЛĂ КАНАШСЕМ

# Сăран япала туянсан

Сăран япаларан ырă мар шăршă кĕрет-и? Ун çине авăртнă кофе сапмалла. Вăл çав шăршăран хăтăлма пулăшĕ.

# Пахалăхне тавăрма

Вăхăт иртнĕçемĕн тĕклĕ алшăлли пахалăхне çухатать: хытать, типĕтме пăрахать. Тăварлă шывра вĕретсен вара вăл каллех çемçелĕ. Ăна утюгпа якатма сĕнмеççĕ.

СЫВЛĂХ

# Кĕтмел – кĕр çырли

**Кĕтмелте А, Р, С витамин, кали, кальци, магни, фосфор, тимĕр пур. Çавăнпах унпа халăх медицининче анлă усă кураççĕ. Вăл бактерисене пĕтерет, шăк хăвалать. Çырла шывĕ артритран, тăвар пуçтарăнсан, ревматизмран, пӳре, шăк хăмпăвĕ шыççан усăллă.**

**Артрит аптăратсан, тăвар пуçтарăнсан.** 1/2 стакан çырлана 1 стакан вĕри шыва ямалла. 10 минутран çак хутăша икĕ пая уйăрмалла. Ăна ирхине тата каçхине ĕçмелле.

**Ревматизмран.** Чĕрĕ е йӳçĕтнĕ 1 стакан кĕтмеле тӳмелле те вĕрекен 3 стакан шывпа пăтратмалла. Вĕретсе 20 минут тăрăлтармалла, унтан тин сăрăхтармалла. Кĕтмел шывне апат хыççăн 4 ăстрăмпа ĕçмелле. Сиплев курсĕ – çулталăкне 2 хут 1-2-шер уйăх.

**Пӳре тата шăк хăмпăвĕ шыççан.** Апатланиччен 30 минут маларах йӳçĕтнĕ 4 кашăк кĕтмеле тӳмелле, 1 стакан вĕрекен шывпа хутăштармалла. 10 минутран сăрăхтармалла. Кĕтмел шывне çийĕнчех ĕçмелле. Сиплев курсĕ – 2 эрнерен пуçласа 2 уйăх таран.

*Халăх мелĕпе сипленме пуçличчен тухтăрпа канашламалла.*

# Сăмсаран юн кайсан

Ун пек чухне пуça пĕкмелле. Юн çулне таса мамăкпа пӳлмелле. Сăмсана сивĕ тытмалла. Чылайăшĕ пуçне хыçалалла ярать, ун пек тума юрамасть: юн сăмса пырне лекме пултарать, çавна май çын хăсма пуçлать.

Сăмсаран е хăлхаран шыв майлă шĕвек тухни, куç айĕ кăвакарни пуç шăммипе мими суранланнине пĕлтерет. Çын тăнне çухатма, хăсма пултарать. Ăна шалкăм çапас хăрушлăх та пур. Суранланнăскерне васкавлă медицина пулăшăвĕ кирлĕ. Хăсăк, юн, сурчăк тип пыра лекесрен шар курнă çынна айккăн хумалла.

ШУТА ИЛМЕ

# Куна пуçламалли сĕнӳсем

Сывлăх çирĕп пултăр тесен ăна валли куллен вăхăт уйăрмалла. Тĕрлĕ сĕнӳ-канаш чылай. Анчах чи витĕмлисем – ирпе вăрансан пурнăçламаллисем.

Хальхинче сĕнекен канашсене пурнăçлама лимон, шыв, пыл тата водород перекисĕ кирлĕ.

Кашни ир шăл тасататпăр эпир. Чĕлхе пирки те манмалла мар. Унсăрăн тĕрлĕ бактери вар-хырăма лексе тĕрлĕ чир-чĕр пуçарма пултарать. Шăпах чĕлхе çинче бактери нумайран çăвартан ырă мар шăршă кĕрет те. Çăвар ăш-чикки пăсăласси те çакăнпах çыхăннă. Чĕлхене тасатма шăл тасатакан щеткăпа та, ятарлипе те усă курма юрать.

Тутлă ыйхăран вăрансан организма шыв кирлĕ. Вĕренĕ е ăшăтнăскере лимон е лимон сĕткенĕ хушса пĕчĕк сыпкăмсемпе ĕçмелле. Шыв вархырăм ĕçне йĕркелет, организма апат çиме хатĕрлет, япала ылмашăвне лайăхлатать, пĕвере тасатать. Лимон сĕткенĕ вара микроэлементсемпе, В тата С ушкăнри витаминсемпе пуян.

Ирхи апат умĕн 10 минут маларах 1 чей кашăкĕ пыл çимелле. Вăл микроэлементсемпе тата витаминпа пуян. Унра вăй хушма, пуça ĕçлеттерме пулăшакан фруктозăпа глюкоза нумай. Иммунитета та çирĕплетет.

Апат çинĕ хыççăн çăвара водород перекисĕпе чӳхени шăлпа тунисемшĕн паха. Кариес аталанасран, çăвартан ырă мар шăршă кĕрсен пулăшать, шăлсене шуратать. Ку тĕллевпе 50 грамм вĕремен тăрă шыва 5-7 тумлам 3 процентлă хутăш ямалла.

Сĕнӳсем чăннипех те пулăшчăр тесен вĕсене куллен пурнăçламалла.

ЧӲРЕЧЕ АНИНЧЕ

# Çутă çителĕклĕ кирлĕ

Пӳлĕмри ӳсен-тăран лайăх çитĕнтĕр, пĕрмай çеçке çуртăр тесен ун валли çутă çителĕклĕ кирлĕ. Апла-тăк люминесцент лампи туянмалла. Вăл пӳлĕме хĕвел пекех çутатĕ. Унпа усă курнă чухне çулталăк, талăк вăхăтне кăна мар, чӳрече хăш енне тухнине те шута илмелле. Кăнтăр енче çутă ытларах. Çак лампа хăватне пула чечек ытларах вăхăт çеçкере ларать.

# Алă айĕнчи симĕс сухан

Пластик пысăк кĕленче тата вĕтĕ сухан кирлĕ пулĕ. Савăтăн çӳлти пайне касмалла. Айккинче сухан диаметрĕнчен пĕчĕкрех çаврашкасем касса кăлармалла.

Кĕленче тĕпне çĕр хумалла. Каснă вырăна сухан чикмелле. Сийĕн-сийĕн çĕр тултармалла. Çиеле пахчаран кăларса кĕртнĕ петрушка е сельдерей тымарĕ лартса хăварма юрать.



ЭЙ, ТĔНЧЕ!

# Ачалăх...



Ăнăçсăр çемьере ӳсрĕ Вера. Ашшĕпе амăшĕ ĕçетчĕç те çапăçма тытăнатчĕç. Хирĕçсен-хирĕçсен чарăнатчĕç те тепре ӳсĕрĕличчен лăпланатчĕç. Ĕçкĕçсем теме те çук-ха вĕсем пирки. Уйăхра виçĕ-тăватă хутчен иртĕхетчĕç хаяррипе, тепĕр кун мухмăр чĕртетчĕç ĕнтĕ. "Канмалли кун" вĕçленсен ĕçе каятчĕç.

Ялта пурăнатчĕç Веруксем. Ашшĕн алли ылтăнччĕ: платник те, столяр та, электрик те хăехчĕ. Ĕçмен чухне вăхăт тупăнсан пулла та çӳретчĕ ашшĕ, сунара та каятчĕ. Кӳршĕре пурăнакан хĕрарăмсем кун пек чухне амăшне ăмсанатчĕç те.

– Упăшкун мĕнпур ĕç патне алли пырать-çке. Ăçтан тупнă эсĕ ăна? Эх, ĕçсе сана хĕнемен пулсан тата... Ху айăплă-тăр, арçын сăлтавсăрах хаярланас çук, – тетчĕç.

Амăшĕ кун пек чухне чĕнместчĕ. Тĕрĕссипе, ашшĕ ĕçсен мĕншĕн çав тери путсĕрленнине Верук та ăнланмастчĕ. Уяв хыççăн тепĕр кун арçын хĕрарăма пăхма тытăнатчĕ: шыв пырса паратчĕ, чей хатĕрлетчĕ, хаяррине те сĕнетчĕ.

– Ĕç-ха, ĕç, самайланăн. Вырт кăштах. Картишне хамах тухăп, – тетчĕ ачашшăн.

Тĕлĕнмелле те, амăшĕ ашшĕне малтанхи каç хĕненĕшĕн пĕр ӳпкевлĕ сăмах та каламастчĕ. Çилленместчĕ те. Тĕрĕссипе, Верук вăл йĕнине те нихăçан та курман. Ашшĕ вара хăйне айăплă туятчĕ-тĕр, çавăнпах хуçалăхри ĕçсене хăех пурнăçлатчĕ, арăмĕ тавра тĕпĕртететчĕ.

Пĕр-икĕ кунтан пĕтĕмпех хăйĕн вырăнне ларатчĕ. Ашшĕпе амăшĕ кил тĕрĕшре тирпейлесен ĕçе чупатчĕç. Амăшĕн пичĕ çинчи кăвак иртсен вуçех манăçатчĕ.

Хĕрарăм ĕçетчĕ пулин те тирпейлĕччĕ. Кил-çуртра та яланах тасаччĕ унăн. Хура япалине наччасрах çуса якататчĕ. Апат пĕçерме те ăстаччĕ. Кукăль пĕçернĕ чухне вара Веруксем патне мĕнпур кӳрши-арши пыма тăрăшатчĕ.

– Чĕлхене çăтмалла вĕт, – тетчĕ пĕри. – Кун пек арăм Фечук ăçтан тупĕ тата? Çавăнпах ыттисем мăйĕнчен çакăнсан та сана пăрахмасть.

– Пустуй ан калаç! Унран пурте хăраççĕ. Анфиса епле хĕненине кураççĕ вĕт. Епле хитреччĕ çамрăк чухне, халĕ вара... – пӳлетчĕ ăна тепри.

Кун пек калаçусем пуçлансан Верук ашшĕпе амăшĕн пӳлĕмне каятчĕ те амăшĕн сăнӳкерчĕкĕсене пăхма тытăнатчĕ. Чăннипех те чиперччĕ вăл унта. Тĕкĕр умне пырса хăйне сăнатчĕ хĕрача – сăнӳкерчĕкрине аса илтернине куратчĕ. "Нивушлĕ манăн та качча кайсан патак çиме тиветши?" – хăраса ассăн сывлатчĕ.

Верук ашшĕпе амăшĕн ĕç укçи пысăк марччĕ. Анчах пахчаçимĕç, улма-çырла çитĕнтернĕрен нихăçан та выçă ларман. Çĕнĕ çи-пуç туянма укçи çитсех каймастĕ вара. Анчах кунта та аптăрамастчĕ Анфис. Хĕрне кивĕ япаларан туххăмрах çĕннине янтăласа паратчĕ. Ура тăхăнмаллипе лару-тăру йывăртарахчĕ. Пĕр пушмакпа Верук темиçе çу та каçатчĕ. Пĕр резина атăпа та темччен çӳретчĕ. Тăвăр пулнăран пӳрни те ыратакан пулатчĕ. Хĕлле вара калуш сырнă кăçатă тăхăнатчĕ. Йĕркеллĕ пушмак çукки Верука пăшăрхантаратчĕ-ха, анчах ашшĕпе амăшĕ çапăçнипе танлаштарсан ку ниме те пĕлтермест пекчĕ. Ара, амăшĕн шыçăннă, юнăхнă пит-куçне, вараланчăк тумне курсан Верук шарт! сикетчĕ.

Ялта Веруксен çемйинче мĕн пулса иртнине пурте пĕлетчĕç, анчах никам та арçынпа хĕрарăм хушшине кĕместчĕ. Ара, мăшăрĕ çине алă çĕклекен Фечук çеç мар вĕт. Пĕрле вĕренекенсем те Веруксем мĕнле пурăннине чухлатчĕç, анчах кун пирки хĕрачапа никам та нихăçан та сăмах хускатмастчĕ. Çапах тепĕр чухне çурăмĕ хыçĕнче "Верука шел" тени хăлхана кĕретчех. Вĕрентекенсем шелленине те туятчĕ Вера.

Ашшĕ урайĕнче йăвалантарса тапа-тапа та хĕнетчĕ амăшне. Пĕчĕкрех чухне хĕрача çакна кĕтессе йăпшăнса шăппăн пăхатчĕ. Ашшĕне хирĕç чĕнме те хăратчĕ. "Турăçăм, аннене çеç ан вĕлер", – йăлăнатчĕ вăл.

– Атте, чарăн! – ӳкĕтлетчĕ Верук ӳсерехпе.

Анчах арçын хĕрĕ мĕн каланине хăлхине те чикместчĕ.

– Марш кунтан! Тух урама! Кайса вĕрен! – кăшкăратчĕ çеç.

Тата кăштах ӳссен Верук амăшне килĕнчен тухса тарма та сĕннĕччĕ.

– Ăçта? – тĕлĕннĕччĕ амăшĕ. – Кампа лайăхрах пултăр пире?

Ун чухне Верука амăшĕ кăштах ăссăр пек туйăнма та тытăннăччĕ. Ара, уншăн çак пурнăç йĕркеллĕ-çке. Вăл урăххи çинчен ĕмĕтленмест те.

Вунтăваттă тултарсан Верук техникума вĕренме кайрĕ. Тĕрĕссипе, ялтан тухса кайма вăхăт çитессе чăтăмсăррăн кĕтетчĕ вăл – килĕнчи хаярлăха курас килми пулса çитнĕччĕ. Унсăр пуçне ашшĕпе амăшĕ ăна нихăçан та ыталамастчĕç те, ăшă сăмах каласа лăпкамастчĕç те. Пуçĕнчен шăлса мухтасси пирки асăнасси те çук. Верук хулана каясса пĕлтерсен те вăтам шкул пĕтерме сĕнмерĕç тăванĕсем. Çула ăсатнă чухне те ыталамарĕç. Çав кун каллех ӳсĕрччĕ вĕсем.

– Лайăх вĕрен, стипенди илмелле пултăр. Манăн укçана ан шан, – терĕ ашшĕ.

Верук çапла хулана куçрĕ. Лайăх вĕренчĕ вăл, стипенди те илчĕ. Общежитире пурăнчĕ. Пушă вăхăтра ĕçлерĕ. Çуллахи каникулта вара вăхăтлăх ĕçе вырнаçрĕ. Тăван ялне чунĕ туртмарĕ унăн. Хăйне хăй тăрантарчĕ-тумлантарчĕ Верук. Ашшĕпе амăшĕ хĕрĕ пирки аса та илмерĕç. Укçа ярса пама мар, çыру та çырмарĕç вĕсем. Хĕрĕ мĕнле пурăннипе пач кăсăкланмарĕç. Верук малтанах вĕренме кĕнине, аван пурăннине çыркаласа пĕлтерчĕ-ха, каярах вăл та çак йăлана пăрахăçларĕ.

Техникум хыççăн Вера ĕçе вырнаçрĕ, каçхине институтра вĕренчĕ. Диплом илсен качча кайрĕ те пурăнма упăшки патне куçрĕç. Аякри хуларан килнĕскерпе пысăк туй тумасăр, тăванĕсене пухмасăр çырăнчĕç вĕсем. Çывăх юлташĕсем çеç саламларĕç çемье çавăрнă ятпа.

Часах хĕр çуратрĕ вăл. Упăшкипе те, хунямăшĕ-хуняшшĕпе те ăнчĕ Верука. Ашшĕ-амăшĕ çеç хĕрне аса та илмерĕ. Верук вĕсем çинчен манмарĕ-ха, пурнăçĕнчи улшăнусем çинчен çырсах тăчĕ, анчах çуралнă килне чунĕ туртмарĕ. Ачалăхне манаймарĕ вăл.

**АНТОНИНА.**

ÇАПЛА ТА ПУЛАТЬ

# Пĕччен хĕрарăм

Кĕр енне кун кĕскелни самаях палăрать. Ял çынни хуçалăхри ĕç-пуçа вĕçлесен пӳрте кĕрет. Гриня та ăшша васкарĕ: сĕтел çинчи салата темиçе кашăк ăша ячĕ те телевизор умне вырнаçрĕ.

Аллă урлă каçнă арçын пĕчченех пурăнать, çавăнпа та апат-çимĕçе хăйĕнех хатĕрлеме тивет. Ку тĕлĕшпе ӳркенмест вăл, темĕн те пĕçерет. Ача чухне амăшĕ хĕрарăм ĕçне хăнăхтарнин уссине арăмĕнчен уйрălнă хыççăн аван туйса илчĕ арçын. Вунă çул ытла пĕчченлĕхре Гриня. Апла пулин те хăйне савăнăç кĕртме пĕлет, час-часах тус-юлташĕсемпе тĕл пулать, каççерен ялти клуба спектакле хатĕрленме çӳрет. Укçа-тенкĕрен татăк тăмасть. Çавăнпа арçын лавккана кĕрсен хĕрарăмсене хăна тума ялан ухута: пылак çимĕç те илсе парать, кăмăла çемçетмеллине те туянать. Хĕрĕхрисене хăйсене тимлĕх уйăракан пурри хытах савăнтарать: упăшкисем аякра чух пĕр самант ирĕкленни мĕнрен япăх? Гриня хĕрарăмсемпе хĕрлĕ шĕвеке сыпсан та пĕрне те çывăха ямасть: ялта сас-хура тухасран шикленет. Çитменнине, упăшкисем умĕнче те лайăх мар. Çапла, тытма пĕлет хăйне. Пĕр каçлăх кирлине райцентра кайса илет. Ирхине вара ăсатса ярать.

Арçынна сенкер экранпа кăтартакан кăларăм килĕшмерĕ. "Çатăлтатса калаçакансене курас килмест, пĕрех хут апла хаçат тытам", – терĕ те "Чăваш хĕрарăмĕн" çĕнĕ номерне вулама пикенчĕ. Çак самантра кантăкран шакканă сасă илтĕнчĕ. "Каçхине кам чăрмантарса çӳрет?" – тарăханçи пулчĕ Гриня. Çапах та чӳречене уçрĕ. Пӳртри çутă тулалла çителĕклĕ ӳкнĕрен кӳршĕ ял хĕрарăмне Галинăна тӳрех палларĕ.

– Манăн санпа сăмах вакламалли пур. Наччаслăха кĕртмĕн-ши? – ыйтрĕ вăл.

– Нумайлăха мар пулсан мĕншĕн хирĕçлес, – хуравларĕ арçын.

Пӳрт алăкне уçрĕ кăна – кĕтмен хăна кĕрсе те тăчĕ.

– Чăрмантарса çӳренĕшĕн каçар. Йывăрлăха лекрĕм эпĕ. Эсĕ пулăшасса шанатăп, – терĕ Галя. – Кун пирки кăшт каярахпа пĕлтерĕп. Малтанлăха хам хатĕрленине тутанса пăхар-ха.

Хĕрарăм куртка кĕсйинчен кĕленче туртса кăларса сĕтел çине лартрĕ.

– Хаяр шĕвеке ăша ямасăр та шалти вăрттăнлăха уçса параймастăп, – çепĕççĕн калаçрĕ "хăна".

Гриня черкке кăларчĕ. Хĕрарăм хăйĕн ĕçне турĕ: эрехе ăша ячĕ. Хыççăн арçынна сĕнчĕ. Унтан иккĕшĕ тепĕр çаврăм турĕç.

– Халĕ сан пата мĕн сăлтавпа килнине пĕлтерме те юрать. Пĕр эрне каялла больницăра пултăм, май пур чухне сывлăха пĕтĕмпех тĕрĕслеттертĕм. Пĕр тухтăр мана арçынпа çывăрма сĕнчĕ, унсăрăн чире кайма пултарассине пĕлтерчĕ. Эпĕ тахçантанпах пĕччен пурăннине хăв та лайăх пĕлетĕн. Пенсири çын çине халь тин кам пăхтăр ĕнтĕ? Лайăххисене тахçанах йышăнса пĕтернĕ. Хусахсем ĕçке ярăннă. Эсĕ вара хальлĕхе пăсăлман-ха. Çавăнпа сан пата килме шухăшларăм, – сăмах çине сăмах тупăнчĕ Галинăн.

– Манăн мĕнпе пулăшмалла? – тăруках тавçăрса илеймерĕ кил хуçи.

– Мĕнле калас та... пĕрле çĕр каçасчĕ. Укçа та парăп. Хакне кала кăна...

– Укçа-тенки хамăн та пур-ха. Хĕрарăм ыйтнине хирĕçлени арçын пултарайманнине пĕлтерет пуль, – шухăшларах калаçрĕ Гриня.

– Тĕрĕснех калатăн. Апла ĕçне тăвăпăр-и?

Тепĕр черкке пушатсан кил хуçи Галинăна çывăрмалли пӳлĕме кĕртрĕ.

– Эсĕ майлашăн, унччен эпĕ хырăнам – кăтăклама пултарĕ тата...

– Хăвăнне хăв пĕл, – терĕ çеç утмăл урлă каçнăскер.

Гриня тасалса якалнă вăхăтра çаппаçарамас тăрса юлнă хĕрарăм утиял айне чăмрĕ. Акă тепĕр вунă минутран арçын та курăнчĕ...

– Мĕн ĕмĕтленни пулчĕ, – савăнăçне пытармарĕ кӳршĕ ялтан килнĕскер. – Маттур, хĕрарăма тивĕçтерме пултаратăн, хăвату чакман-ха.

Иккĕшĕ кухньăна кайса кĕленчери юлнă шĕвеке пушатрĕç. Галина çывăрма юлмарĕ, каç сĕмлĕхне пăхмасăр килне хыпаланчĕ. Часах хура мĕлке куçран çухалчĕ.

**Юрий КОРНИЛОВ.**
Элĕк районĕ.

САВĂ СĔВЕМĔ

Светлана АСАМАТ

# Пĕр кун илĕм-тилĕмĕ

***

Хамăра хамăр хĕрхенме,
Хамăра хамăр шеллеме,
Хамăра хамăр юратма,
Хамăра хамăр ăшăтма
Пĕлменнипе чирлетпĕр мар-и?

Хамăра хамăр сивлесе
Ĕнтĕркесе каятпăр мар-и,
Хамăра хамăр тиркесе
Чĕмсĕрленсе каятпăр мар-и?
Хамăршăн хамăр тăмасассăн
Сĕмсĕрленсе каятпăр пуль,

Хамăршăн хамăр тăрăшмасăр
Нишлĕленсе каятпăр пуль.

Аскăнлăх тапхăрĕ асать.
Ма йĕрĕнсе хирĕçлеместпĕр?
Чыссăрлăх тапхăрĕ чышать.
Ма кар! тăрса хӳтĕленместпĕр?
Мĕншĕн тесессĕн, шел пулин те,
Хамăра хамăр йӳле янă,

Хамăра хамăр шара янă,

Хамăра хамăр мура панă.

Иртĕхе ирĕк – аскăнма,
Ирсĕре ирĕк – чашкăрма.
Мĕн çаварать куçа, пуçа,
Мĕн тĕтĕрлет мала, хыçа,
Ырри е тискерри – хуçа,
Мĕн аркатать çак пурнăçа?

Ыйту нумай, хуравĕ – шăп,
Сассăмăр – шăп, утăм та – тăп.

***

Паян эп вăйлă, эпĕ çамрăк,
Тухăç тыр-пуллă ман каçалăк.
Ыран та вăйлă, çирĕп пулăп,
Эткерĕмпе эп ырă курăп.

Наян пулсассăн эп паян,
Юхăнчăк пулĕ ман – ыран.

***

Лашуна ятлан, çапан,
Ху эс уншăн мĕн тăван?
Çитермен лаша ырхан,
Утă-сĕлĕ çук-им сан?

Уттине çулас пулать,
Капана пухас пулать.
Сĕллине акас пулать,
Пӳлмене хурас пулать.
Ĕçчен лаши – урхамах,
Пăхас пулать хамăрнах.

***

Савманнине сава-сава
Сарăхса кайма юрать-и?
Савакана тĕртсе ярса
Ыррине курма пулать-и?

Савманнине хăвала,
Савакана çупăрла.

***

Эп шăнкăрчла та шăнкăртатрăм,
Эп шăпчăкла та шăпăртатрăм,
Саркайăкăн – кĕсле каларăм,
Эп саншăн – антăхса юрларăм.
Эсĕ илтмерĕн, итлемерĕн,
Мана асăрхама пĕлмерĕн.
Сана ман кĕвĕ килĕшмерĕ,
Сан кăмăлна тивĕçтермерĕ.

Итлерĕн урăх кайăка,
Мана илтме хăлху мăка.
Эс урăх çын, сана валли,
Эп мар, çуралнă урăххи.

***

Саркайăкăн савнасси
Улăх ути çуличчен,
Яш-кĕрĕмĕн савнасси
Яшлăх иртсе кайиччен.

Улăх ути çулнă чух
Кайăк чунĕ хурланать,
Яшлăх иртнĕ майĕпе
Çамрăк ĕмĕр каталать

Ĕмĕр малалла каять:
Сарă хĕр качча тухать,
Сарă йĕкĕт авланать,
Сарă çемье çаврăнать.

Сарă çемье ăшшинче
Ача-пăча çуралать,
Ачи-пăчи ӳснĕçем
Ашшĕ-амăш ваталать.

Çуркуннехи вăхăтсем -
Йывăç-курăк çеçкисем,
Кĕркуннехи вăхăтсем -
Писнĕ çимĕç тĕшшисем.

Саркайăкăн савăнма
Улăх çăра пуличчĕ,
Пурнас килсе пурăнма
Пурнăç тулăх пуличчĕ.

***

Мĕншĕн сана куртăм-ши,
Ма куçа хупмарăм-ши,
Мĕншĕн сана саврăм-ши,
Ма чуна чармарăм-ши?

Ма чармарăм-ши чуна
Санăн çумна йăпшăнма,
Сан ытамна ăмсанма,
Хама хам сана пама.

Эпĕ яланах хастар,
Пур ĕçре те вăр та вар:
Тĕплĕн те яваплăн, веç! –
Вĕресе тăрать ман ĕç.

Ăнланмарăн, те хăрарăн,
Те вăтантăн, шарламарăн.
Сан çинчен манас пулать,
Хама хам упрас пулать.

Юрĕ, эп сана курман:
Паллашман, ыталашман,
Куççульпе те çăвăнман...
Юрĕ, эп сана савман...

***

Тутлă туйăм, тутлă апат евĕр
Тутлăн ăш-чике лăплантарать.
Тутлă апат тутине туйсассăн
Тутлăн пурăнас килсе тăрать.

Шăчăртаттăр ăш-чикри вучах,
Ан тивейтĕр кĕвĕç пăтăрмах.
Выçлă-тутлă пурăнма кичем,
Йăлкăштăр ăшри хĕрӳ хĕлхем.

***

Каялла май çаврăнтăм,
Утăм турăм, чарăнтăм.
Малалла та, каялла та
Çул çуккишĕн макăртăм.

Кайри – кайра, малалла
Кампа утса каймалла?
Апла пулсан хам тавра
Чару карти кармалла.

Чару карти çӳллĕшĕ –
Шухă шухăш сывлăшĕ.
Никам сиксе каçас çук,
Ютти çуммăн тăрас çук.

Кăшкăрупа ыйту палли
Шăтăрнакла карăнчĕç,
Кăшкăрупа ыйту палли
Ыйткалама тапăнчĕç.

Ишсе тăкас! Ишсе тăксан,
Чупса кайăп ыткăнса,
Таçта çĕтсе çӳрĕ тусăм
Сукмак йĕрне шыраса.

Ишсе тăксан – чару-чарак
Чăтăмĕ вăйсăрланать,
Хирĕнекен хурлăхăма
Тӳсесси кăна юлать.

Хурлăхăма сирсе яма
Тусăм анчах пулăшĕ...
Вĕрсем, вĕрсем ман еннелле
Унăн яка сывлăшĕ.

Ан улталан, ан улталан,
Шанса кĕтни килеймĕ,
Тусăм тени сана текех
Хăй хӳттине илеймĕ.

Чару карти варĕнче те,
Чару юпи çумĕнче
Тăлăх чунăм макăрнисем
Кăвак пĕлĕт тĕтринче.

Чару карти алăкĕнчен
Тусăм утса кĕринччĕ,
Картиш çине хĕвел алли
Кĕрен чатăр çакинччĕ.

***

Савман савни, савман савни,
Ăçтан, ăçтан тупăнтăн?
Телей кĕтнĕ шанчăк шевли
Ма çурмалла çурăлтăн?

Савман савни, савман савни,
Мĕншĕн куçа курăнтăн?
Куç умĕнчи телей карри
Мĕншĕн хăварт хупăнтăн?

Савман савни, савман савни,
Кама савса пурнатăн,
Урăххипе, урăх çĕрте
Нивуш телей куратăн?

Савман савни, савман савни
Савманнине пĕлетĕп,
Савман савни, савман савни
Савманнишĕн йĕретĕп.

Саваканни эп савасса
Кĕтет, кĕтсе илеймест,
Ӳкĕтлеме çук туйăма
Кӳрентермест, хистемест.

Савман савни савманнине
Мĕн-ма пуçа хумастăп?
Мĕн-ма чунтан савакана
Чуна шанса памастăп?

***

Утмăлта-и, çитмĕлте-и çын,
Ун хăйне юратнине туяс килет,
Мăшăрĕн, мăнукĕсен, ачи-пăчин,
Тус-тăванĕн хисепне курас килет.
Куçĕпе курса савнас килет,
Чунĕпе туйса савнас килет.
Çакă савăнăç пачах та çук пулсан
Ун часрах çĕре кĕрес килет.

Вăл сывласа янă савăк вăхăт,
Вăл сывлама чарăннă самант
Пĕр пулаççĕ, шăплăха анаççĕ,
Канăç вырăна канма выртаççĕ.

Тек кансĕрленсе кансĕрлемеççĕ
Сутă тĕнчери пĕр никама та,
Вĕрентмеççĕ, сĕрлемеççĕ, кӳренмеççĕ,
Сас памаççĕ, хутшăнмаççĕ никампа та.

Каçарсамăр, кайнă ватăсем,
Ватăлса курма пӳрмен яшсем.
Чунăрсем Çӳлти киле çĕклентĕрччĕç,
Турă сăвапне курса килентĕрччĕç.

***

Çумăр çукалиш тăвать,
Аслати кăлтăртатать,
Çиçĕм иртĕхсе кайсан
Çумăр ĕрĕхсе каять.

Кăвак тӳпе хуралчĕ,
Хĕвел таçта пытанчĕ,
Пĕлĕт пулкки кĕпĕрленсе
Вăрçă-харçă пуçарчĕ.

Çавă хура пĕлĕте
Ним те тĕртсе яраймасть,
Хура пĕлĕт кăра вăйне
Ним те пăхăнтараймасть.

Урса кайса тӳнклеттерет
Тăвăл – çутçанталăка,
Пăрлă çумăр ӳпĕнтерет
Йывăçа та курăка.

Калча пуçне татса перет,
Чечексене çĕмĕрет.
Çак тискере çӳл тӳпере
Мĕскер пăхса ӳстерет?

Йăваласа хытарать те,
Çĕрелле вирхĕнтерет,
Çĕре сăтăр тунипеле
Ахăрашса хĕпĕртет.

Ăш çумăрпа сивĕ çумăр
Черетленсе килеççĕ.
Çӳлти такам хушнипеле
Кассăн-кассăн ӳкеççĕ.

***

Тарса пытантăм терĕн-и?
Чĕнместĕн.
Ниçта пытанаймастăн,
Çĕтейместĕн.
Асăмрине чĕнсе илетĕп те –
Килетĕн,
Иртнĕлĕхре эс
Ман çумра çӳретĕн,
Манпа ыталанса, чуптăвăнса
Ĕмĕр пĕрле пулма
Ĕмĕтленетĕн.

Çаплаччĕ иртсе кайнă вăхăтра,
Халĕ тĕлпулусем сĕре сайра,
Ятарласа та мар,
Пачах та ăнсăртран...
Куçпа курни çырлахтарать пулсан,
Апла-тăк, пирĕн пурнăçсем аван.

Пĕр-пĕринчен писсе çитни –
Пĕрлĕх çĕтни, туслăх пĕтни.
Телефонпа калаçасси –
Иртнисене хускатасси,
Çуралнă кун уявĕпе
Телей сунса саламласси...

Юрĕ, тупăнайми пытан,
Выля, нимрен те ан вăтан.
Текех шăнкăравлассăм çук,
Эп саншăн – çук, эс маншăн – çук...
Эп те вылям пекки тăвам,
Эп те сан пек, иртнисене
Маннă пекки туса пăхам.

***

Ирхи, кăнтăрлахи, каçхи
Апат паратăп хырăма.
Кунĕпеле эп мĕскерпе-ши
Тăрантаратăп чунăма?

Теме те ăнланма пулать,
Ултавçăна ăнланаймастăн.
Теме те каçарма пулать,
Сутăнчăка каçараймастăн.

Теме те хăнăхма пулать,
Таптанине хăнăхаймастăн.
Теме те пусарма пулать,
Чунсăрлăха пусараймастăн.

Ултавçă, сутăнчăк пулма,
Тус-пĕлĕше ура хума,
Тискерленме, выçăхланма
Кам вĕрентсе тăрать çынна?

Куç умĕнче – куç кĕскисем,
Вĕсем çинче – чăпар сăнсем...
Апат памашкăн чунăма
Лăкас пулать ăс-тăнăма...

***

Кайрăн-тăк, кай яланлăха,
Тек каялла таврăнмасла.
Мĕн ĕмĕрӳ вĕçлениччен
Ан асилтер тек ху çинчен.

Йĕрсе тăртаннă сăнăма
Çăл шывĕпе шăлса якатăп,
Йĕрсе тăртаннă асăма
Çиçĕм ăшне ывăтса ярăп.
Вара тинех хама санран
Хăтарăп та çуталса кайăп.

Çуталса кайăп шуçăмла,
Çуталса кайăп çăлкуçла,
Çĕнĕ сăнпа, çĕнĕ пуçпа –
Эп сывлăп çĕнĕ сывлăшпа.

Кай, ара, кай, таврăнмасла,
Тек ĕмĕрне тĕл пулмасла...
Кив кĕпене вутта перетĕп,
Çĕнĕ, паха тумтир çĕлетĕп.

***

Пирĕшти паян мана
Шăрçаллă-тенкĕллĕ
Парне тыттарчĕ,
Çĕнĕ сурпан çыхтарчĕ:
Пĕр сăвă ярăмĕ хывтарчĕ.

Пуçа тайса çырса ларни –
Чунтан Турра эп тав туни.



ÇУХАТУ

# Шăнкăрав кулли, çăмăл утти – куç умĕнчех

**Тĕлĕнмелле илемлĕ тăрăхра вырнаçнă Патăрьел районĕнчи Пăлапуç Нурăс ялĕ. Вăрман çумне йăпшăнса ларнă вăл. Тӳпенелле кармашакан ĕмĕрхи хырсен ытамĕнче хӳтлĕх тупнăн туйăнать. Çак пĕчĕк ялта сăмахпа каласа кăтартма çук ытарайми хитре вырăнта, çуралса ӳснĕ те ЧР тава тивĕçлĕ артистки Ольга Почалкина. Шел, питĕ йывăр пулин те, ун пирки малашне иртнĕ вăхăтра калаçма тивет. Никама та тиркемен вилĕм, йывăр та хăрушă чир ăна ытла та ир илсе кайрĕ. 41 çултах. Темĕн чухлĕ кĕрешсен те усал шыçça çĕнтереймерĕ вăл. Ĕнер тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем Ольга Почалкина пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнăранпа 40 кун çитнине асăнчĕç.**

Пăлапуç Нурăс тăрăхĕнчи Ишлĕ Шетмĕри 9 çул вĕренмелли шкулта Ольга Почалкина ятне асăнсанах вĕрентекенсен куçĕсем шывланчĕç.

– Эпир нимĕн те пĕлмен, вăл 4 çул чирлесе пурăнни çинчен илтмен, пирĕншĕн кĕтменлĕх пулчĕ, уяр кун çиçĕм çиçнĕ евĕрех. Хурланатпăр, хамăр çемьери инкек пекех йышăнатпăр. Ĕненес килмест, хĕвел куллиллĕ чипер Оля, унăн шăнкăрав кулли, çăмăл утти куç умĕнчен каймасть, – терĕç. Учительсем вăл вылянă спектакльсенчен чылайăшне вырăнта мар, Шупашкара килсе курнă, унăн кашни çитĕнĕвĕшĕн хĕпĕртенĕ.



– Шкулта чухнех артистран кая мар вылятчĕ. «Судра» спектакльте – Ухтеркеччĕ. Алима та лайăх сăнарлатчĕ. Сцена çинчи самантсем халь те куç умĕнчех. Питĕ хаваслăччĕ Оля, тепĕр чухне чунĕнче йывăр пулсан та кулатчĕ. Хурланнине кăтартман вăл. Аслă классенче чухне артиста вĕренме каяс ĕмĕт-шухăшлăччĕ. Вăл шкул пĕтернĕ çул шăпах «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пĕлтерӳ тухрĕ, еплерех хĕпĕртерĕ Оля. Аттестат илсенех Ленинграда вĕренме тухса вĕçтерчĕ. Кăçалхи çурлан 29-мĕшĕнче ăна юлашки хут куртăм. Аппăшĕн кумăшĕ патне килчĕç. «Людмила Алексеевна, салам», – аякранах кăшкăрса сывлăх сунчĕ мана. Яланхи пекех йăл кулать хăй. Ман мăшăр, Вячеслав Софронович, вĕсен класс ертӳçиччĕ. Уншăн та кĕтменлĕх пулчĕ, юлашки çула ăсатнă чухне куçĕ шывланчĕ, сасси чĕтренипе масар çинче пĕр сăмах калаймарĕ. Питĕ хисеплетчĕ Ольăна, унăн çитĕнĕвĕсемшĕн, тапса тăракан пултарулăхĕшĕн, вăл ыттисенчен урăхларах пулнишĕн çав тери савăнатчĕ, – каласа кăтартрĕ **Людмила Чернышева вĕрентекен.**

– Волейболла выляма юрататчĕ. Кĕске сарă çӳçне турани халь те асран каймасть. Класĕпех лайăх вĕренетчĕç, ăмăртусене, конкурссене хастар хутшăнатчĕç, пĕринчен тепри маттурччĕ. Эпир унăн сывлăхĕ япăххи пирки пĕлмен. Вилес умĕн ялан сехет çине пăхнă теççĕ. Театра кая юласран пăшăрханнă вăл. Куçне ĕмĕрлĕхе хупиченех чунтан парăннă ĕçĕ пирки шухăшланă мăнтарăн. Çапла, тӳпере çутă çăлтăр йăлтăр çуталчĕ те сӳнчĕ, – терĕ ассăн сывласа **математика учителĕ Алина Геннадьевна.**

Тăватă çул каялла Оля чирлĕ ашшĕне хулана больницăна илсе кайнă. Хăйĕн те сывлăхĕ япăххи, вăйĕ çукки пирки, тепĕр виçĕ кунтан йывăр операцие каясси çинчен ялта никама та, амăшне те, пĕлтермен вăл.

Ишлĕ Шетмĕри ача садĕнче кĕçĕн воспитательте тăрăшакан чи çывăх **тантăшĕ Светлана Митяева** ачаран пĕрле выляса ӳснĕ юлташĕ пирки куççуль витĕр каласа кăтартрĕ.

– Пĕр касра выляса ӳснĕ эпир. Клуба яланах виççĕн çӳреттĕмĕр: Оля, эпĕ тата Ирина. Ишлĕ Шетмĕрен ялан юрласа таврăнаттăмăр. Ыйхă килменнипе çĕрĕпе сак çинче шăкăлтатса лараттăмăр. «Çывăрма памастăр, мĕншĕн хытă кăшкăрса юрлатăр», – чӳречине уçса вăрçатчĕ Уксине аппа. Ырă вырăнта вырттăр кинеми, тахçанах вилчĕ вăл. Ун хыççăн Ольăн амăшĕ Марье аппа: «Оля чарăн, хытă кулатăн, сан сассу кăна», – ятлама пикенетчĕ. Ман анне те тăрса юлмастчĕ. Иринăна та амăшĕнчен ят тиветчĕ. Виççĕмĕр те юрлама юрататтăмăр çав. Ольăн ашшĕпе амăшĕ – ирçесем. Килĕнче вĕсем ытларах вырăсла калаçатчĕç. Оля та ирçе чĕлхине лайăх пĕлетчĕ, – куççульне шăла-шăла аса илчĕ тантăшне Светлана. – Çурла уйăхĕнче ялта икĕ эрне пурăнса кайрĕ Оля, пĕрре те тĕл пулаймарăмăр. Эпĕ вăл чирленине пĕлмен. Пахчара çĕрулми кăлараттăмăр, пĕр-пĕрне аякран алă султăмăр. Эпĕ пырса кайма ыйтрăм. Çурлан 29-мĕшĕнче. «Ыран хулана каятăп, ывăнтăм, пырса çӳреместĕп», – терĕ. «Сан ялан вăхăт çук» тесе кӳрененçи те турăм çавăн чухне. Пĕлмен çав нимĕн те, чирленине калас килмен ĕнтĕ унăн, савăнăç марçке. Амăшĕн хăлхине кĕресрен те шикленнĕ паллах.

Çамрăксен театрне тантăшĕ вылянине курма чылай çӳренĕ Светлана. «Вăрмана юлнă çамрăклăхри» ăсран кăшт тайăлнă Санюк халĕ те куçĕ умĕнчех.

– Пĕррехинче тата Оля йыхравланипе пĕр автобус тиенсе Шупашкара çитрĕмĕр, пĕр артист тăрук чирлени пирки спектакль пулмасть-мĕн. Оля унта та кăмăла çавăрчĕ, пире, хула тăрăх саланса пĕтнĕскерсене, пурне те пуçтарчĕ те драмтеатра илсе кайрĕ. Оля чирленине амăшне Шупашкара илсе кайнинчен çеç пĕлтĕмĕр. «Оля начар», – теççĕ ялта. Ĕненес килмерĕ. Тантăшăм Ирина та кайса курнă килне. Ун чухне йывăрланса çитнĕ Ольăна уколсемпе пĕрмай çывăратнă пулнă. Вăранса куçне уçсан: «Ой, Ирина, эсĕ те килтĕн-и, эпĕ чирлине ăçтан пĕлтĕн?» – тенĕ. Ирина куççульне чарайман. «Мĕншĕн йĕретĕр, кама мĕн пулнă, кам та пулин вилнĕ-им?» – тенĕ хайхискер. Вилес умĕн темиçе кун маларах юлашки юрă, «Не жалею, не зову, не плачу» юрланă, – чи çывăх тантăшĕпе çыхăннă самантсене пĕр вĕçĕм куçĕ умне кăларчĕ Светлана.

Пурнăçран ытла та хăвăрт уйрăлса кайнă ăста та пултаруллă, халăх юратакан артисткăн амăшĕпе тĕл пуласинчен кăштах шикленнĕччĕ те. Ахаль те ыратакан, çĕрĕн-кунĕн куççульпе çăвăнакан мăнтарăн амăшĕ патне кĕрсе чунне татах хурлантарас теменччĕ. Шкултан тухас умĕн: «Ольăн амăшĕ патне кайса килĕр, тĕл пулса калаçăр, вăл пĕччен пурăнать, питĕ ăшă чунлă хĕрарăм, тата хăçан кайса куратăр-ха» – хистерĕç вĕрентекенсем.

Картишĕнче те, тăпăл-тăпăл пӳртĕнче те тап-таса та тирпейлĕ, ниçта пĕр ытлашши япала çук. Малти пӳрти сĕтел çинче сурта çунатчĕ.



Елена АТАМАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.

– Тăватă çул каялла чирленĕ хĕрĕм, эпĕ вара нимĕн те пĕлмен те, сисмен те. Вăл манăн чи кĕçĕнни. Тăваттăнччĕ, пĕри акă пăрахса кайрĕ. Сцена çинче выляс, çынсене савăнтарас вырăнне хура йывăр тăпрапа витĕнсе выртрĕ. Манăн каймалламччĕ, ватă ĕнтĕ эпĕ, 79 çулта. Нимĕн те тума çук-çке, эх, хамăн чĕрене кăларса параттăм, япала мар çав, улăштараймастăн, – хуллен те лăпкăн калаçать **Мария Федотовна.** – Мĕнле чĕре пулнă-ши унăн, епле чăтрĕ-ши: нимĕн те систермерĕ. Виличчен темиçе кун маларах çеç пĕлтĕм. Мăнук авланчĕ, Оля унта каймарĕ, вăйĕ пулман мĕскĕнĕн. Телефонпа час-часах шăнкăравлатчĕ, вăрах калаçатчĕ манпа. «Укçу пĕтет, хур-ха телефонна», – теттĕм. «Анне, укçа вăл татах пулать», – тетчĕ хирĕç. Хĕрĕм вилес умĕн темиçе кун маларах кăшкăрсах макăртăм, çав вăхăтра Оля шăнкăравлать. «Мĕншĕн йĕретĕн, мĕн пулчĕ, анне?» – тет. Суйрăм, радиопа хурлăхлă юрă юрлаççĕ терĕм. Оля вутă купалать-и, çурать-и, пахчара ĕçлет-и, пĕрмай юрлатчĕ. «Ырра мар ĕнтĕ çакă», – теттĕм ăшăмра. Салхуллине курман ăна, ялан хаваслăччĕ, кулса çеç çӳретчĕ. Япăххи, усалли пирки нихăçан калаçман. Çурлан 29-мĕшĕнче çĕрулми кăлартăмăр. Вăл кулни халь те хăлхара янраса тăрать. Ăçта вăйĕ тупăнчĕ-ши, пĕр канмасăр ĕçлерĕ. Мăнукăма Ромăна шеллетĕп. Шкула каять-и, шкултан таврăнать-и – килте амăшĕ çук-çке. Хĕрарăм ачана арçын пек мар, çавах урăхла пăхать.

**Елена АТАМАНОВА.**

# Вăл çуккине йышăнас та, ĕненес те килмест

Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕн тĕп режиссерĕ Иосиф Дмитриев Ольга Почалкинăна 1991 çултанпа пĕлет. Иккĕшĕ Санкт-Петербургри театр искусствисен академийĕнче паллашнă. "Ирçе хĕрĕ чăвашла калаçни тĕлĕнтернĕччĕ", – аса илет Иосиф Александрович. Артистка ача-пăчана та, çулланнă хĕрарăмсене те ĕнентерӳллĕ кăтартни тавра сăмах пуçарчĕ вăл. "Ама кайăк çулĕпе" ĕçри Кĕçĕннин сăнарне калăпланăшăн ăна Мускав, Питĕр критикĕсем ырланă. "Ольга Почалкина роль вылянисĕр пуçне спектакль кăмăлне, шухăшне тытса пыма пултаратчĕ. Вăл артист профессине мĕншĕн суйласа илнине тата театра мĕн сăлтавпа ĕçлеме вырнаçнине лайăх ăнланатчĕ", – тет **Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Иосиф Трер.**

Ольга Почалкина çуркунне "Покажите мне весну" çĕнĕ спектакльте ача кĕтекен хĕрарăм сăнарĕпе куракан умне тухрĕ. Ун чухне çакă унăн юлашки ĕçĕ пуласса пĕлмен те. Эпир пурте артист чире çĕнтерессе, вăй илессе шаннă-ĕненнĕ.

Çак камите Василий Шукшинăн калавĕсем тăрăх хатĕрленĕ. "Яла кайса çут çанталăк чĕрĕлнине курмасан маншăн çуркунне çитнĕн те туйăнмасть", – пытармастчĕ Оля. Спектакль ятне шутласа тупма та пулăшрĕ вăл. Хăйĕн сăнарне питĕ юрататчĕ. Мăшăрне вылякан Леонид Яргейкин ролĕ ăна ашшĕне аса илтерни пирки калатчĕ. Сывлăхĕ хавшаса пынине кăтартасшăн марччĕ", – палăртать **"Покажите мне весну" спектакль режиссерĕ Дмитрий Петров.** Оля ăна чăвашла кăтартма пуçласса кĕтнĕ. Анчах унта выляма пӳрмен ăна. Сăмах май, Çамрăксен театрĕн артисчĕсем "Чунра яланах çуркунне" камитпе Тутарстанри Пăва тăрăхне те кайса килнĕ.

"Ольга Почалкина пирĕнтен уйрăлса кайни – Çамрăксен театрĕшĕн кăна мар, чăваш искусствишĕн пысăк çухату. Эпир вĕт пуринпе те кăсăкланса тăратпăр. Вăл чăваш театрĕн уçлăхĕнче хăйĕн вырăнне тупрĕ. Тата та интереслĕрех сăнарсем калăплама пултаратчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен, вăл тĕрлĕ енлĕ уçăлчĕ, хăйĕн пултарулăхĕпе тĕлĕнтерчĕ.

Ольга пирĕн йышра çуккине ĕненес те, йышăнас та килмест. Вăл отпуска кайнă пек... Кĕç-вĕç ĕçе тухассăн туйăнать. Ăс-тăн çеç артистка текех нихăçан та килмессине çирĕплетет. Чунĕ çӳлти патшалăхра çӳретĕр унăн", – пĕтĕмлетет **Çамрăксен театрĕн режиссерĕ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Вячеслав Оринов.**

Ятарласах виçĕ режиссерпа çыхăнтăм. Вĕсем пурте ĕçе хакланă май "тĕлĕнмелле" сăмахпа усă курни хăех Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Ольга Почалкинăн пултарулăх шайне кăтартать. Сцена ăсти хăйĕн сăнарĕсемпе куракансене тыткăнлани тавра нумай калаçрăмăр. Вĕсем театра юратакансен асĕнче юлĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**



– Чунăм, эпĕ паян каçхине юлташсемпе хупаха сăра ĕçме каям-ха...

– Кайсам, ара, никам та майракунтан тытса тăмасть...

* * *

– Салам! Мĕнле пурăнатăн?

– Начарланма шухăшларăм-ха. Ĕнер фитнес дискне туянтăм.

– Мĕнле пек вара?

– Пĕлместĕп-ха. Сĕтел хушшине вырнаçрăм та торт çинĕ май диск пăхатăп халĕ...

* * *

Малтан хăть уйăхра икĕ хутчен те пулин ĕçе каяс килетчĕ. Халĕ вара шалăва та банк карттипе илме пулать те...

* * *

– Тĕлĕнетĕп сирĕнтен: вăтăр çул пĕрле пурăнатăр ĕнтĕ – хулана тухсан вара халĕ те алăран çавăтăнса çӳретĕр. Вăт ку – юрату!

**☺ И-ХИ-ХИК ☺**

– Ара, вĕçертсен арăм тӳрех лавккана мĕн те пулин туянма чупать...

* * *

Арăмĕ – упăшкине:

– Эпĕ пулман тăк мĕн тăваттăнччĕ-ши эсĕ?

"Мĕн тăваттăм, мĕн тăваттăм, – шухăшлать арçын. – Чи малтан, паллах, тӳрех юттисем патне кайăттăм. Ĕçĕттĕм, туртăттăм, мунчана, сунара, пулла, çӳрĕттĕм... Мĕн тумаллине тупăттăм-ха та..."

Сасăпа вара:

– Мĕн тăваттăм ĕнтĕ – тунсăхласа вилĕттĕм, – тет.

* * *

Шăмă татки пăрахса панăшăн кашни йыттах хăйне ачашлама ирĕк памасть. Пикене ресторана чĕннĕ май каччăсен çакна асрах тытмалла.

* * *

– Чунăм, урай çумаллаччĕ, – тет арăмĕ упăшкине. – Пирĕн мунчала ăçта-ши?

– Эпĕ кунтах.

* * *

Маршруткăра.

– Каçарăр та, сире манăн сумка чăрмантармасть-и?

– Çук, ан пăшăрханăр.

– Чăрмантарать пулсан – калăр, эпĕ ăна айккинерех куçарăп.

– Юрать.

– Сумка сире çапах та чăрмантарнă пек курăнать – темĕнле чалăшса ларатăр эсир.

– Ну-у, кăштах кăна...

– Апла, илем-и айккинерех?

– Юрĕ, илĕр эппин.

– Аха – илĕр!!! Ăçта куçарасха манăн ăна!!! Тен, ăçта лартмаллине те калатăр?!!

* * *

Судья:

– Залра ларакансем, шăпланăр, шăпланăр! "Судья пире тивĕçтермест!" – тенине тепре илтсен пурне те кăларса яратăп.

"Судья пире тивĕçтермест!" – илтĕнсе каять çавăнтах.

Судья:

– Айăпланакан, сире пырса тивмест ку.

* * *

Автобусра.

– Сирĕн билет пур-и?

– Çук. Хăвăрăн пур-и-ха?

– Эпĕ кондуктор.

– Эпĕ вара – электрик. Мĕнле шухăшлатăр – манăн та электроэнергишĕн тӳлемесен те юрать-и?

* * *

– Начарланма тĕв турăм-ха.

– Тахçанах-и?

– Çур сехет каялла. Палăрать-и?

– Палăрать – куçу выçă.

* * *

– Ас тăватăп, пирĕн ача садĕнче те пĕр пуçтах пурччĕ. Пурне те хĕнетчĕ, мана çеç тивместчĕ. Эпĕ тĕреклĕччĕ çав, хирĕç çапма пултараттăм. Çавăнпах кăларса ячĕç мана садикрен.

– Мĕншĕн?

– "Хуралçăн ачасемпе çапăçма юрамасть", – терĕç...

* * *

Улттăри Вовочка,

– Анне, шкулта миçе çул вĕренмелле?

– Вун пĕр.

– Институтра вара?

– Пиллĕк.

– Охо! Апла эпĕ тӳрех института каятăп!

* * *

Пĕр кирпĕчрен çурт купалама пулать-и? Пулать иккен! Пĕрре кăна мар – темиçе те. Çурт купалас вăрттăнлăхсем çинчен ПАИ инспекторĕ Сидоров каласа кăтартма пултарать.

* * *

Арăмĕ ĕçрен таврăннă çĕре упăшки кухньăра юлташĕсемпе ларать.

– Мĕн ячĕпе ĕçетĕр?

– Япала туянтăмăр та – çăватпăр.

– Мĕн туянтăр вара?

– Виçĕ кĕленче эрех.

* * *

Каччă:

– Мĕн, Лексуспа принц килессе кĕтетĕн-и?

Хĕр:

– Çук... Чи – кирли – çынни лайăх пултăр... Лексусĕ вара... хăть те хăш модель пултăр – пĕлтерĕшлĕ мар...

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ,** пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 28 руб., 9х20х40 – 24 руб. Высокое качество. Доставка манипулятором. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** железобетонные для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7.ГРАВМАССУ, ПЕСОК, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 8-903-358-17-70, 8-927-668-97-13, 38-97-13.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**15. Кирпич**, блоки. Т. 89613393363.

**20.Кирпич:** красный, цветной, облиц. Скидки. Т. 89276678378.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 89278558355.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**30.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**37.**Ворота, калитки, **заборы,** навесы. **Ковка,** кровля, обшивка сайдингом. Общестроительные и сварочные работы. Замер. Д-ка. Установка. Гарантия. **Пенсионерам – скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, сайт:metalservis21.ru

**74.Керамблоки вибропрессованные, пропаренные.** Все размеры. Доставка. Т. 89176776846.

**123.Гравмассу, песок, бетонные отходы, навоз.** Доставка по низким ценам. Т. 8-927-850-28-21.

**596.ТЕПЛИЦЫ** по ценам производителя. **Доставка. Сборка.** Т. 48-16-54.

**773.Чуптарнă пăру – Шупашкар районĕнче.** Т. 8-937-398-73-24.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**39.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**109.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**38.ЧИСТКА КОЛОДЦЕВ.** Т. 8-967-471-50-70.

**45.Лечение алкоголизма, табакокурения.** Т.: 8/8352/ 215345, 89199785855. *Лиц. 5001001230 от 08.06.2007. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**51.Бурение колодцев,** скважин, **колодезные кольца** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 8-960-302-12-93.

**745.Утепление домов пеноизолом.** Гарантия. Скидки. Т. 380373.

**750.**Веселая **тамада.** Т. 89373935779.

### ĔÇ РАБОТА

**126. Монолитчики, плотники,** монтажники, шлифовщики, **каменщики, сварщики.** Питание, спецодежда. Вахта. Тел. 8-925-002-22-38.

**748.Требуются сотрудники** в офис. Гибкий график, хороший доход, возможно совмещение. Т. 8-919-667-06-78.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

51 çулти ĕçчен арçын типтерлĕ хĕрарămпа çемье çавăрасшăн. Т. 8-937-381-40-25.

## ПУКАШ ПУТИШĔСЕМ

# Ĕримпе Çăрахвим ăçта?

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ умĕн Пукаша çамрăк учителе – Апполон Тимофейча – янă. Лешĕ шкул ачисен ячĕсене урам тăрăх çĕнетсе-тӳрлетсе çӳренĕ. Каска çинче Лиссаппа Тулипе кӳрши Аврам шăкăлтатса ларнă. Тимофейчă вĕсен умне çитсе тăнă. Тетрачĕ те хул хушшинчех.

– Кăçал шкула Ĕримпе Çăрахвиме те яраççĕ Яккăнсем. Коротковăсене те çырса хурăр, – сĕнеççĕ ватăпа çамрăк шӳтçĕ. – Килĕнче çук вĕсем, уя хуратул çумлама кайрĕç.

Авăнăн 1-мĕшĕ. Киреметкассинчи шкул умĕнче – уяв. Лариван пичче те мăк сухалне вĕлкĕштерет, çĕнĕ çăпата сырнă, шурă тăли çинче хĕвел шевли вылять. Карчăкки те шурă кĕпепе. Савăнăçлă...

Тимофейчă 1-мĕш класа килекенсен ячĕсене вулать.

– Римма, Серафима Коротковăсем! – чĕнет хушаматпах.

– Вĕсем иккĕшĕ те 50-ран иртнĕ-çке, – ахăрать халăх.

Анчах вулавçи илтмест те тейĕн:

– Ĕримпе Çăрахвим ăçта? – тĕпчеме чарăнмасть тетрадь тытни...

Çав ахăрашу саманчĕ, Лиссаппа ывăлĕпе Аврам атăçă пуçарни, паян та Пукаш-Энĕш хутлăхĕнче асран тухман-ха.

**А.АНИШОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.


**« ХЫПАР »**
Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.



**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07

**Электрон почти:** hypar@mail.ru



Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 06.11.2015 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.
Тираж 7576. Заказ 4311.